Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТЯБĔР 28 ЕРНЕКУН 249(5062) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕÇĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—1—40, парти пурнăç пайĕн—0—86, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйăн — 6—23.

Строителсен пайанхи задачĕсем

ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ парти Обкомне, Халăх Комиссарĕсен Советне, райкомсене, райĕçтăвкомсене тата хуçалăх органĕсене капиталлă строительствăа валъљи панă укçа-тенкĕпе пĕтĕмĕшпех усă курма мĕн кирлине пурне те тума, çавăн пекех тата республикăри район центрĕсенчи пурăнмали çуртйĕрпе коммуналлă строительствăна вăйлатма хушса хăварчĕ.

Капиталлă строительствă валъљи панă укçа-тенкĕпе усă курасси вăл—ирĕнĕ çулта тытăннă строительствăсене туса пĕтересси, çĕнĕрен пысăк стройкăсем, темиçе вуншар шкулсем, йаçлĕсем, пурăнмали тата ытти нумай тĕрлĕ çуртсем тăвасси пулать. Ку вăл политикăлă пысăк ĕç пулса тăрать. Социалисăмăн ыранхи кунĕ пайан туса пыракан строительствăран килет. Строительствă ĕçне ăнăçлăн илсе пыни ĕççынниссен материаллă пурнăçне пуйанлатса, културăлăхне çĕклесе пымали услови пулать. Çавăнпа ĕнтĕ партипе правительствă капиталлă строительствă ĕçне йалан пысăккăн хаклаççĕ, çултан çулах мĕлйуншар тенкĕ укçа хываççĕ.

Халăх Комиссариачĕсен, хуçалăх организацисен, строителсен хисеплĕ те ответлă ĕçе—капиталлă строительствă планне ăнăçлăн тултарма мĕн кирлисем пурте пулнă, халĕ те пур. Партипе правительствă строительствă ĕçне ăнăçлăн илсе пыма укçа-тенкĕ çеç мар, материаллă-техникăлă базă туса панă. Строительствăсенче техникăна алла çавăрса илнĕ совет инженерĕсем, техниксем ĕçлеççĕ. Пысăк маçтăрлăхпа ĕçлекен кадрсем куллен кун ÿсеççĕ. Апла пулин те строительствă ĕçĕ халĕ те йулса пырать-ха. Строителсем иртнĕ çулхи йăвăр уроксенчен болъшевикла вывăдсем туман. Çавăн çинчен калаççĕ ĕнтĕ иртнĕ виçĕ квартăлти цифрăсемпе фактсем.

Каçал капиталлă строительствă ĕçĕсене тума панă укçа-тенкĕрен виçĕ квартăл хушшинче те 42,7 проценчĕпе çеç усă курнă. Октăберĕн 1-мĕш тĕлне строительствăсене туса пĕтерес плана сметă хакĕпе пурĕ те 31 процент çеç тултарнă. Пĕр халăх комиссариачĕ те, пĕр хуçалăхлă организаци те плана пĕтĕмĕшпех тултарман. Уйрăмăнах Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ начар ĕçленĕ. Вăл 9 уйăх хушшинче çулталăкри плана 47 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Вырăнти промышлĕннăç, Суту-илÿ тата Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕсем те строительствă ĕçне начар туса пыраççĕ.

Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ каçал та, иртнĕ çулхи пекех, строительствă планне пурнăçа кĕртмен. Халăх Комиссариачĕн, çавăн пекех Стройтрестăн, кивĕ руководителĕсем плана тултарассине аркатса йанă, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлемен, панă укçа-тенкĕпе усă курман. Вĕсем тимсĕр ĕçленĕ пиркийех Шупашкарта советсен çуртне тăвас йенĕпе виççĕмĕш квартăлти ĕçсен хисепне 500 пин тенкĕлĕх, водопровод тата електростанци тăвас йенĕпе 270 пин тенкĕлĕх чакарнă. Анчах чакарнă плана тултарасси те начар пырать.

Шупашкарпа Канаш тата Улатăр хула совечĕсем строительствă ĕçĕсем çине çăмăллăн пăхни хыттăнах палăрать. Шупашкарта урамсене асфалът сарасси вăраха йулнă. Канашпа Улатăрта мунчасем, ача йаçлисем тăвасси начар пырать. Пурăнмали тата културă çурчĕсене йусасси йенĕпе те палăрмалăх ĕçсем туман.

Строительствă ĕçĕ начар пыни Халăх Комиссариачĕсен, строительствă органĕсен тата совет организацисен руководителĕсем сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессишĕн болъшевикла тимлĕхпе ĕçлеменнинчен килнĕ. Анчах та вĕсем йулашки татăклă кунсенче те пулин хастарлăн ĕçлеме тытăнман, хăйсем çавăрăнаçусăр ĕçленине тĕрлĕрен сăлтавсемпе тÿрре кăларма тăрăшаççĕ. Стройтрест руководителĕсем ĕç вăйĕ çитмен пирки çеç начар ĕçлетпĕр, теме те хатĕр. Ĕç вăйĕ мĕншĕн çителĕксĕр-ха? Ун çинчен вĕсем шутласшăн та мар. Тĕрĕссипе илсен, ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулнишĕн те хăйсемех айăплă. Вĕсем кадрсем хатĕрлеме панă 93 пин тенкĕ укçаран 10 пин тенкипе çеç усă курнă, рабочисем валъљи çуртсем тума, ĕçе механизацилеме панă укçа-тенкĕпе те тивĕçлĕн усă курмаççĕ.

Фактсем строительствă материалĕсем йенĕпе те ĕçсем хуçалăх организацисен руководителĕсем калани пек мар, урăхла тăни çине кăтартса параççĕ. Шупашкарта педагогикă институчĕн иккĕмĕш черетри çуртне тума тытăнма материалсем пулнă çеç мар, вĕсене хатĕрлесе те хунă. Анчах строительствă ĕçĕ пуçланман.

Виçĕ квартăл хушшинче строительствă ĕçĕ йулса пыни строителсен умĕнче тăваттăмĕш квартăлта тăракан задачăсене тата та пысăклатать. Строителсен пайанхи задачи—пĕтĕм вăйсене мобилизацилесе, çулталăкри плана ăнăçлăн вĕçлесе çитересси пулать. Çакна кĕтет çĕршыв, çакна кĕтеççĕ ĕççыннисем.

Халĕ строительствă çезонĕн йулашки кунĕсем пыраççĕ. Вĕсем ĕççыннисен политикăлă тата производствăлă активлăхĕ пысăккăн çĕкленсе пынă вăхăтра иртсе пыраççĕ. Çĕршывăн пур кĕтесĕсенче те Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту вăйлăн сарăлса пырать. Халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планне пур йенĕпе те ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе, çитес çулта тата та пысăк çĕнтерÿсем тума хатĕрленер!—çакăн пек ĕнтĕ Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртун тĕп лозунгĕсенчен пĕри.

Уйав умĕнхи ăмăртун тивлечĕсене строительствă участкисенче те йышлăн куратпăр. Стахановла тухăçлăхпа ĕçлекенсем кашни стройкăра вуншарăн шутланаççĕ. Строительствă руководителĕсен, инженерсен, техниксен малта пыракансен опычĕсене сарса пырса, массăлă ăмăртăва çÿле çĕклемеле тăвас пулать.

Строителсем хушшинче социалисăмлă ăмăртăва сарса пырса, ăна стахановла йухăмăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ тăвасси ăмăрту догăварĕсем çырнипех пулмасть. Стахановла йухăма чăн-чăнах плана тултарма май паракан йухăм тума сăтăрла ĕçсен йулашкисене хăвăрттăн пĕтерсе, пĕтĕм ĕçе çирĕп график тăрăх илсе пыни кирлĕ. Кашни бригадă, рабочи хăй ĕнер мĕн тунине, ыран мĕн тумалине пĕлсе тăтăр. Механисăмсемпе туллин усă курмала. Рабочисене стахановла ĕçлеме условисем туса памала.

Строительствă планне тултарасси строительствă тата хуçалăх организацисен ĕçĕ çеç мар. Строительствă ĕçĕсемшĕн партипе совет организацисем ответлă. Вĕсен ĕçе сăнаса тăмала çеç мар, строительствă тата хуçалăх организацисене сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе конкретлă йертсе пымала. Стройкăсенче политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатмала. Çапла туса ПСК(б)П чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференци кăтартса хăварнине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмеле.

Шупашкар хулинчи комсомол активĕн пухăвĕ Сталин йулташ патне йанă çыру

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Орденлĕ Чăваш республикĕн столицинчи комсомол активĕ Сире, халăхсен генилĕ çулпуçне, социалисăмăн аслă çĕнтерĕвĕсене чĕрĕ вăй парса хавхалантарса пыракана, совет çамрăкĕсен тусне, ашшĕне тата учителне—комсомолла хĕрÿлĕ салам йарать.

Ленин—Сталин аслă партийĕн йалавĕ айĕнче пырса, Есĕр йертсе пынипе, пирĕн аттесемпе аслă пиччесем граждăн вăрçин фрончĕсенче çапăçрĕç тата çĕнтерчĕç. Çав йалав айĕнче пырсах епĕр социалисăм строительствинче пысăкран та пысăк çĕнтерÿсем турăмăр.

Есĕр, хаклă Иосиф Виссарионăвич, аслă совет халăхне тĕнчери чи демократилĕ Конституци—çĕнтернĕ социалисăмăн Конституцине патăр.

Епĕр Сирĕн епохăра пурăннишĕн мухтавлă та телейлĕ. Сирĕн йат пирĕншĕн кĕрешÿ тата çĕнтерÿ çимвăлĕ пулса тăрать. Сирĕн йатпа Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи фронтăн геройĕсем Йапони самурайĕсене хирĕç атакăна кайрĕç, çĕнтерÿ турĕç, пирĕн ытарайми тăван çĕршывăн никам пырса тĕкĕнейми чиккисене сыхласа хăварчĕç.

Пире икĕ туйăм йертсе пырать—Ленин—Сталин партине, социалисăмлă тăван çĕршыва йуратас туйăм тата халăх тăшманĕсене курайманлăх туйăмĕ. Ленинла комсомол ПСК(б) Партийĕ тата Есĕр хăвăр йертсе пынипе, Сталин йулташ, комсомол ретне хĕсĕнсе кĕнĕ троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла фашисла агентсене çĕмĕрсе тăкрĕ тата малала та вĕсене вĕçне çитиех çĕмĕрсе тăкса пырать.

Ленинла-сталинла комсомол, совет çамрăкĕсем хăйсен умне болъшевиксен партийĕ тата Есĕр, Сталин йулташ, лартнă задачăсене пурнăçа кĕртнĕ чух нимĕнле йăвăрлăхсемпе чăрмавсене те пĕлмен тата пĕлмест те.

Парти, Сталин йулташ, пĕтĕм совет халăхĕ пысăк шанăç хунипе тата йуратнипе хавхаланнă ленинла комсомол хăй 20 çул тултарнă йубилейа пĕрлĕхлĕ пулса, болъшевиксен партийĕ тата унăн сталинла Тĕп Комитечĕ тавра, хăйĕн учителĕ тата тусĕ Сталин йулташ тавра пĕтĕçнипе кĕтсе илет.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе епĕр хамăр ретре çамрăк патриотсем, социалисăмлă тăван çĕршыва тивĕçлĕ граждăнсем, пирĕн тăван болъшевикла партине тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçне аслă Сталина вĕçĕ-хĕррисĕр парăннă çынсем ÿстерсе çитĕнтерессишĕн малашне те пĕтĕм вăйа хурса ĕçлĕпĕр.

Сывă пултăр Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партийĕ!

Сывă пултăр ленинла-сталинла комсомол!

Сывă пултăр аслă Сталин!

Совет Сойузĕн Геройне В. П. Винокурăв лейтенанта

Комсомолăн Шупашкар хулинчи активĕ сана, ленинла-сталинла комсомол пăхса ÿстернĕ çынна, пысăк наградă илнĕ йатпа хĕрÿлĕн сывлăх сунса саламлать.

Пирĕн аслă тăван çĕршыв чиккисене пархатарлăн хÿтленĕшĕн ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ сана Совет Сойуз Геройĕн йатне памала туни пирĕн чĕресене тулли кăмăлпа савăнтарать. Санăн геройла хăйула ĕçÿ Чăваш республикĕнчи мĕнпур комсомолĕцсене хамăрăн тăван çĕршыв-аннемĕр ырлăхĕшĕн тата лайăхрах ĕçлеме, ПСК(б) Партин ленинла-сталинла Тĕп Комитечĕ тавра, пирĕн атте тата учител, халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин тавра татах та тачăрах пĕтĕçме чĕнет.

Сан пата, хаклă Вйачеслав, комсомолла хастарлă салам йаратпăр тата сана Шупашкар хулине килсе курма чĕнетпĕр.

Шупашкар хулинчи комсомол активĕн пуху президиумĕ.

Шупашкар хулинчи комсомол активĕн пухăвĕ

Октăберĕн 26-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи комсомол активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ А. А. Волкăв йулташ Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференци итогĕсем çинчен доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче Чăваш парторганизацин руководствинче ларнă халăх тăшманĕсемпе двурушник-предателсем сăтăрла ĕçсем туса пыни çинчен каласа пачĕ, комсомолĕцсене чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртессишĕн болъшевикла кĕрешме чĕнчĕ. Волкăв йулташ Канаш—Шупашкар чукунçул строительствине кĕске вăхăтра туса пĕтерме кирли çинчен уйрăмăнах чарăнса тăчĕ.

Пренире тухса калакансем Воробйов (пионервожатăйсен шкулĕ), Йефимăвă („Красный молот" ертел), Панишĕвă (Госплан) т. ыт. те комсомолăн хула комитечĕпе облăç комитечĕ чукунçул тăвас ĕçре кирлĕ пек пулăшса пыманнине палăртрĕç. Вĕсем хăйсем чукунçула туса пĕтеричченех унта ĕçлеме пулни çинчен каларĕç. Актив пухăвĕ вĕсен сĕнĕвĕсене пĕр саслăн йышăнчĕ. Çавăнтах президиума вуншар çын чукунçул çине ĕçлеме йама ыйтса зайавленисем пачĕç.

Комсомол активĕн пухăвĕ Сталин йулташ патне çыру йачĕ.

Тата актив Хасан кÿлли патĕнчи çапăçусен участникĕ Совет Сойузĕн Геройĕ лейтенант В. П. Винокурăв йулташ патне салам йачĕ.

★ ★

Йалсенчи врачебнăй участкăсене çирĕплетесси

Октăберĕн 25-мĕшĕнче Мускавра автономлă республикăсенчи сывлăха сыхлав халăх комиссарĕсен, крайсенчи тата облăçсенчи сывлăха сыхлас ĕç пайĕсен заведуйушчийĕсен пĕтĕм Российари канашлăвĕ уçăлнă. Канашлу ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йалти врачебнăй участкăсене çирĕплетесси çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртес ыйтусем çинчен сÿтсе-йавать.

РСФСР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ И. и. Белоусăв йулташ хăйĕн сăмахĕнче сывлăха сыхлас ĕçĕн вырăнти органĕсен ĕçне хытă критикленĕ. Правительствăн кирлĕрен те кирлĕ постановленине, йалта медицинăлă пулăшу парас ĕçе тĕпренех лайăхлатас шутпа йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси çителĕксĕр пулса пырать, хăшпĕр тĕлте вăл ĕçе чăрмантарса тăраççĕ. Республикăра йалти врачебнăй участкăсене 6.890 уçмала. Вĕсенчен 2.506 участкинче халиччен те врачсем çук. Хуласенчен йалсене врачсем йарасси тÿсме çук хуллен пырать. Халъ те, правительствă постановлени йышăннă хыççăн та, РСФС Республикĕнчи йалсенче врачсем пит нумай çитмеççĕ. Çав вăхăтрах хуласенче 48.814 врач шутланать, йалсенче—6.772 врач кăна.

Сывлăха сыхлас ĕçĕн вырăнсенчи хăшпĕр органĕсем врачсене йалсене куçарма пулăшмаççĕ кăна мар, час-часах врачсене тĕрлĕ майсемпе хулара хăварма та тăрăшаççĕ. Сăмахран, Иркутск облăçĕнчи хуласенче халъхи вăхăтра 502 врач ĕçлеççĕ, йалсенче—68, Мускав облăçĕнчи хуласенче—3.267 врач, йалсенче—594, Сталинград облăçĕнчи хуласенче—1.033 врач, йалсенче—218. Йалсене 2.370 врач йамала пулнă, октăберĕн 10-мĕш тĕлне вĕсенчен 1.549 врачне кăна йанă. 1938 çулта вĕренсе тухнă врачсене йала йарас ĕçе пачах çителĕксĕр организациленĕ.

Белоусăв йулташăн çакна ирĕксĕрех йышăнмала пулнă: вăл йертсе пыракан Халăх Комиссариачĕ те Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе, сăтăрлăх йулашкисене хăвăрт пĕтерес тĕлĕшпе ниме йурăхсăр хÿллен ĕçленĕ, тимлĕхсĕр пулнă.

Пренисенче Иванăвă облăçĕнчи сывлăх пайĕн заведуйушчийĕ Сивинков йулташ, Горький облăçĕнчи сывлăх пайĕн заведуйушчийĕ Жичин йулташ т. ыт. те тухса каласнă.

(ТАСС).

Навигаци планне тултарнă

Мускав—Атăл канал работникĕсен коллективĕ Октăберти Социалисăмлă Аслă револђуци XXI çул тултарнă куна производствăра пысăк çĕнтерÿ тунипе кĕтсе илет. Коллектив социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йанине пула 1938 çулхи навигаци планне пур йенĕпе те тултарнă. Навигаци пуçланнăранпа пассажирски пăрахутсен флотили 2 мĕлйуна йахăн çынна кирлĕ çĕре илсе çитернĕ.

Чи лайăх пассажирски пăрахутсем—„Иосиф Сталин", „Вячеслав Молотов", „Клим Ворошилов", „Михаил Калинин" теплоходсем т. ыт. те пĕр авари тумасăр стахановла ĕçлесе уйрăм уйăхсенче пассажирсем лартса çÿрес плана икшер хут тултарнă. (ТАСС).

—О—

Галифакс тухса калаçни

ЛОНДĂН, октăберĕн 25-мĕш. Ĕнер Англин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ лорд Галифакс Единбургра пысăк сăмах тухса каланă. Хăй сăмахĕнче Галифакс Мÿнхĕнри килĕшĕве мухтанă, вăл килĕшÿ „пулма пултарас вăрçăран çăлса хăварчĕ" тенĕ вăл. Чехословакин малашнехи кунçулĕ пирки сăмах хускатса, Галифакс çапла каланă: „Епĕр Венгри требованийĕсем саккунлă тесе йышăнатпăр, вĕсене пурнăçа кĕртмели мелсем тупăнĕç тесе шаматпăр", тенĕ. (ТАСС).

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: А. Кокоракин художник ÿкернĕ плакат „Сывă пултăр ССРС—рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви!" Ăна „Искусство" издательстви кăларнă.

Сойузфото репродукцийĕ.

ССРС орденĕсемпе, „За отвагу" тата „За боевые заслуги" медалъсемпе наградăлани

Центри хаçатсем çинче ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командирăйпа началъствă составне, красноармейĕцсене, командирăйпа началъствă составĕн килйыш членĕсене, госпиталъ тата суту-илÿ флочĕн работникĕсене ССРС орденĕсемпе медалъсем парса наградăлани çинчен кăларнă Указсем пичетленĕ.

Хасан кÿлли районĕнчи оборонă вăхăтĕнче боевой заданисене кăтартулăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, паттăр та хăйулăх кăтартса кĕрешнĕшĕн 20 çынна Ленин орденĕ, 120 çынна „Хĕрлĕ йалав" орденĕ, 120 çынна „Хĕрлĕ Çăлтăр" орденĕ, 120 çынна „За отвагу" медалъ, 120 çынна „За боевые заслуги" медалъ парса наградăланă.

Хаçатсен малали номĕрĕсенче наградăсем парасси çинчен кăларнă Указăн малалисем пулаççĕ.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Мускаври Ленин орденлĕ, М. Горький йачĕпе тăракан художĕствăлă Академи театрне наградăлани

Совет театр културин аталанăвĕнче пысăк ĕçсем тунăшăн, театр пуçланни 40 çул тултарнă йатпа, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ ССР Сойузĕн Мускаври Ленин орденлĕ, М. Горький йачĕпе тăракан художĕствăлă Академи театрне ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăламала тунă.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Мускаври Ленин орденлĕ, М. Горький йачĕпе тăракан художĕствăлă Академи театр артисĕсене наградăлани

ССР Сойузĕн Мускаври Ленин орденлĕ, М. Горький йачĕпе тăракан художĕствăлă Академи театрĕ пуçланни 40 çул тултарнă йатпа, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ ССРС халăх артисĕсене: Книппер-Чеховăна, Тарханăва тата РСФСР халăх артисткисене: Лилинăна, Шевченкона Ленин орденĕ парса наградăланă.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса ССРС халăх артисне—Леонидăва (ăна унччен Ленин орденĕ парса наградăланă), РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ артисĕсене: Степанăва, Соколова, Чебана, Кедрăва т. ыт. пурĕ 10 çынна, наградăланă.

„Знак почета" орденĕ парса 21 çынна тата ССРС Верховнăй Совечĕн Хисеп Грамăти парса 13 çынна наградăланă.

* * *

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕ РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ артисĕсене (художĕствăлă театр артисĕсене)—Иеланскайана, Прудкинăна, Ливанăвăна т. ыт. пурĕ 11 артиса РСФСР халăх артисĕсен йатне памала тунă, çавăн пекех художĕствăлă театр артисĕсене пурĕ 24 çынна тата театрăн ытти работникĕсене РСФСР искусствин тава тивĕçлĕ деятелĕсемпе тава тивĕçлĕ артисĕсен йатне памала тунă.

* * *

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ М. Горький йачĕпе тăракан МХАТ 40 çул тултарнă уйава паллă туса ирттересси çинчен постановлени йышăннă.

Театр институчĕсенче, училищăсенче, студисенче МХАТ театрне пуçласа йăракансен тата паллă артиссен йачĕпе 20 пысăклатнă стипенди пулать.

ССРС халăх артисне—В. И. Немирович-Данченкона 25 пин тенкĕ, ССРС артисĕсене: Москвина, Книппер-Чеховăна, Леонидăва тата РСФСР халăх артискине—Лилинăва 20 пиншер тенкĕ укçапа премилемеле тунă.

Тата ытти нумай артиссемпе театр работникĕсене укçа тата тĕрлĕрен хаклă парнесем парса премилĕмеле тунă.

(ТАСС).

★ ★

Праçник тĕлне—çĕнĕ хватер

ИРКУТСК, октăберĕн 25-мĕш. Октăбĕр праçникĕ тĕлне хулари ĕççыннисене пурăнмали 4-шар хутлă калама çук лайăх çуртсем туса панă, 194 çемйе чаплă хватерсене кĕнĕ. Центрти урамра чукунçул управленин çуртне туса пĕтереççĕ, унта 180 хватер пулать.

Иркутскра тата Ленино поçолăкĕнче 23 чулçурт туса çитереççĕ.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. **КĔСКЕ КУРС.** ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

IV сыпăкăн йулашки

5. Партин 1912 çулта Прагăра пулса иртнĕ конференцийĕ. Бољшевиксем хăйне уйрăм марксисла партине йĕркеленни.

Ликвидаторсене тата отзовиссене хирĕç кĕрешни, çавăн пекех тата троцкиссене хирĕç кĕрешни те, бољшевиксен умне пит те пысăк задача—бољшевиксене пĕтĕмпех пĕр çĕре пĕтĕçтерсе, хăйне уйрăм бољшевикла парти тăвас задача кăларса тăратнă. Çакна туни партири оппортунисла йухăмсене, рабочи класа сапалантарса йаракан йухăмсене, пĕтерме кăна мар пит те кирлĕ пулнă. Çакна туни тата рабочи класăн вăйĕсене пуçтарас ĕçе вĕçне çитиччченех туса çитерсе, рабочи класа çĕнĕ ревољуцилĕ çĕкленĕве хатĕрлеме те кирлĕ пулнă.

Анчах çак задачăна пурнăçлас тесен, пуринчен малтан партине оппортуниссенчен, мењшевиксенчен тасатмала пулнă.

Халĕ ĕнтĕ бољшевиксенчен никам та бољшевиксем малала та мењшевиксемпе пĕр партире тăни тивĕççĕр пулни çинчен иккĕленсе тăман. Столыпин реакцийĕ тапхăрĕнче мењшевиксем хăйсене мĕнле предатĕлле тыткалани, вĕсем пролетарилĕ партине пĕтерсе лартса, çĕнĕ, реформисла парти тума хăтланнисем вĕсенчен уйăрăлассине пурпĕрех пулмала туса хунă. Мењшевиксемпе пĕр партире тăрса, бољшевиксем кирек мĕнле пулсан та мењшевиксем хăйсене мĕнле тыткаланишĕн морањнай ответ тытнă. Анчах, бољшевиксем партипе рабочи класăн изменникĕсем пулса тăрас темен пулсан, мењшевиксем уççăнах сутăннишĕн бољшевиксем морањнай ответ тытасси ĕнтĕ киревсĕр йапала пулса тăнă. Мењшевиксемпе пĕр парти рамкинчех пĕрлĕх тытса пыни, çапла вара, рабочи класпа унăн партине сутса йарассине ўссе куçнă. Çавăнпа та мењшевиксемпе чăнласах уйăрăлассине вĕçне çитиччченех пурнăçа кĕртмеле пулнă, вĕсемпе формаљнă-организацилĕ уйăрăлассине вĕçне çитиччченех туса çитерсе, мењшевиксене партирен хăваласа кăлармала пулнă.

Пĕр çак çул çинче кăна пролетариатăн пĕрлĕхлĕ программăлă, пĕрлĕхлĕ тактикăлă, пĕрлĕхлĕ клас организацилĕ ревољуцилĕ партине туса хума пулнă.

Пĕр çак çул çинче кăна партин мењшевиксем ишĕлтернĕ чăн-чăн (формаљнай пĕрлĕхне анчах мар) пĕрлĕхне туса хума пулнă.

Çак задачăна бољшевиксем хатĕрлекен пĕтĕм партин VI-мĕш конференцийĕ пурнăçа кĕртмеле пулнă.

Анчах çак задача ĕçĕн пĕр йенĕ çеç пулнă. Мењшевиксенчен формаљнă уйăрăлса кайни, тата бољшевиксем уйрăм партине йĕркелени, паллах, пит те пысăк политикăлă задача пулнă. Анчах бољшевиксем умĕнче тата тепĕр, кунтан та ытларах кирлĕ, задача тăнă. Вăл задача — мењшевиксенчен уйăрăлса, бољшевиксем уйрăм партине йĕркелениниче кăна мар, пуринчен малтан, мењшевиксенчен уйăрăлса кайса, Хĕвеланăçĕнчи йаланхи социал-демократла партисенчен уйăрăлса тăракан, оппортунисла елементсенчен ирĕклĕ, пролетариата влаçшăн кĕрешме илсе пыма пултаракан çĕнĕ парти тăвассинче, çĕнĕ сăнарлă парти тăвассинче пулнă.

Бољшевиксене хирĕç кĕрешнĕ чухне, мењшевиксем пурте, пур тĕрлисем те, Аксељродпа Мартынăвран пуçласа Мартăвпа Троцкий таранах, — йаланах Хĕвеланăç Йевропăри социал-демократсен арçеналĕнчен илнĕ хĕçпăшалпа усă курнă. Вĕсем Российăра та, калăпăр, нимĕççен йе французсен социал-демократла партийĕ пек парти тăвасшăн пулнă. Вĕсем бољшевиксене хирĕç çавăнпа кĕрешнĕ те, мĕншĕн тесен бољшевиксен темскер çĕнни, йаланхи пек марри, Хĕвеланăçри социал-демократинчен уйрăмми пуррине сиснĕ. Хĕвеланăçĕнчи социал-демократла партисем унчухне мĕнле партисем пулнă-ха? Вĕсем марксисла тата оппортунисла елементсене, ревољуци тусĕсене тата унăн тăшманĕсене, партилĕхе майлă тата ăна хирĕç тăракансене — малтанхисем кайранхисемпе идейă тĕлĕшпе майĕпен килĕштермеле туса, малтанхисем кайранхисене майĕпен чăнласах пăхăнса тăмала туса, хутăштарни, лăтратса йани пулнă. Оппортуниссемпе, ревољуцине сутакансемпе килĕшни, — мĕн пирки, тесе ыйтнă Хĕвеланăç Йевропăри социал-демократсенчен бољшевиксем. „Партири мир" пирки, „пĕрлĕх" пирки — тесе ответленĕ бољшевиксене. Камсемпе пĕрлĕх тумала, оппортуниссемпе-и? Çапла, ответленĕ вĕсем, оппортуниссемпе. Паллă пулнă, çавăн пек партисем ревољуцилĕ партисем пулма пултарайман.

Енгĕљс вилнĕ хыççăн, Хĕвеланăç Йевропăри социал-демократла партисем социаљнай ревољуци партийĕсенчен „социаљнай реформăсен" партийĕсем пулса кайнине, çав партисенчен кашнийех, организаци пулса, йертсе пыракан вăйран хăйĕн парламентри группин хўринче çапкаланса пыракан пулса тăнине бољшевиксем курмасăр тăма пултарайман.

Çавăн пек партирен пролетариат ыррине курас çуккине, çавăн пек парти рабочи класа ревољуци тумашкăн илсе пыма пултарайманнине бољшевиксем пĕлмесĕр тăма пултарайман.

Бољшевиксем пролетариата çавăн пек парти мар, урăх, çĕнĕ, чăн-чăн марксисла парти кирлĕ пулнине пĕлмесĕр тăма пултарайман, вăл парти оппортуниссем тĕлĕшпе ним килĕшми тата буржуази тĕлĕшпе ревољуцилĕ пулмала, вăл парти пит те çирĕп пĕтĕçсе, пĕрлĕхлĕ пулмала, вăл парти социаљнай ревољуци партийĕ, пролетариат диктатурин партийĕ пулмала.

Бољшевиксем хăйсем патĕнче шăпах çавăн пек, çĕнĕ парти тăвасшăн пулнă. Бољшевиксем вара çавăн пек партине туса, хатĕрлесе пынă. „Економиссене", мењшевиксене, троцкиссене, отзовиссене, пур тĕрлĕ идеалиссене хирĕç, емпириокритиксем таранах, кĕрешсе пынин историйĕ, — шăпах çавăн пек партине хатĕрленин пĕтĕм историйĕ пулнă. Бољшевиксем, чăн-чăн ревољуцилĕ марксисла парти пултăр тененнисемшĕн пуриншĕн те образец пулма пултаракан, çĕнĕ, бољшевикла парти тăвасшăн пулнă. Бољшевиксем çавăн пек партине кивĕ „Искра" вăхăтĕнчех хатĕрлесе пынă ĕнтĕ. Вĕсем ăна ниме пăхмасăр, тимлĕн, çине тăрса хатĕрленĕ. Çак хатĕрленўлĕ ĕçре Ленинăн „Что делать?", „Две тактики" тата ытти кĕнекисем тĕп тата татăклă вырăн йышăнса тăнă. Ленинăн „Что далать?" кĕнеки çавăн пек партине идеологи тĕлĕшпе хатĕрлени пулнă. Ленинăн „Шаг вперед, два шага назад" кĕнеки çавăн пек партине организаци тĕлĕшпе хатĕрлени пулнă. Ленинăн „Две тактики социал-демократии в демократической революции" кĕнеки çавăн пек партине политикă тĕлĕшпе хатĕрлени пулнă. Йулашкинчен, Ленинăн „Материализм и емпириокритицизм" кĕнеки çавăн пек партине теори тĕлĕшпе хатĕрлени пулнă.

Шанчăклăнах çакна калама пулат̆: историре нихăçан та пĕр политикăлă группăна та, бољшевикла группăна хатĕрленĕ пек, партине йĕркелеме çавăн пек тĕплĕн хатĕрлеймен.

Çавăн пек условисенче бољшевиксен партине йĕркелесси пĕтĕмпех хатĕрленсе тата пулса çитнĕ ĕç пулнă.

Партин VI конференцин задачи вăл — хатĕрлесе çитернĕ ĕçе мењшевиксене хăваласа кăларнипе, çĕнĕ партине, бољшевиксен партине йĕркеленипе вĕçлесси пулнă.

Партин пĕтĕм Российăри VI конференцийĕ Прагăра 1912 çулти йанварьте пулса иртнĕ. Çак конференцире партин 20 организацисенчен представитĕлсем пулнă. Çавăнпа вăл формаљнă партин сиесĕ вырăнĕнчех пулнă.

Конференци çинчен çырнă пĕлтерўре, партин ишĕлтернĕ центрти аппаратне тепĕр хут туса хуни çинчен, парти Тĕпкомне туни çинчен пĕлтернĕскерĕнче, çапла каланă: реакци çулĕсем, Российăри социал-демократи пĕрпаллă организацине чăмăртаннă вăхăтранпа, партишĕн чи йăвăр çулсем пулса тăраççĕ. Пур тĕрлĕ хĕсĕрленисене, тулаш йенчен хайаррăн пырса çапнисене, парти ăшĕнчи оппортуниссем сутăннисене тата пăрканнисене пăхмасăр, пролетариатăн партийĕ хăйĕн йалавне тата хăйĕн организацине сыхласа хăварнă.

„Российăри социал-демократин йалавĕ, унăн программи, унăн ревољуцилĕ завечĕсем кăна мар сыхланса йулчĕç, унăн организацийĕ те сыхланса йулчĕ, ăна ишĕлтерсе, вăйсăрлатса пыма пултарнă, анчах нимĕнле хĕсĕрленисем те тĕппипех пĕтерме пултараймарĕç", — тенĕ конференцин пĕлтерĕвĕнче.

Конференци Российăри рабочисен йухăмĕ çĕнĕрен çĕкленме пуçланнин малтанхи паллисене тата партилле ĕç чĕрĕлнине палăртса панă.

Вырăнсенчен килнисен доклачĕсем тăрăх, конференци „вырăнсенче пур çĕрте те социал-демократла рабочисем хушшинче вырăнти вăрттăн ĕçлекен социал-демократла организацисемпе группăсене çирĕплетес тĕлĕшпе ĕç тимлĕн пырат̆" тесе кăтартса панă.

Конференци çакна палăртнă: вырăнсенче пур çĕрте те бољшевикла тактикăн отступлени тапхăрĕнчи пит те кирлĕ правилине — рабочисен уççăн ĕçлекен пур тĕрлĕ обществисемпе сойузĕсенче те уççăн ĕçлессине вăрттăн ĕçлессипе сыхăнтарассине йышăннă.

Прагăри конференци партин бољшевикла Тĕп Комитетне суйланă. Çав Тĕп Комитет составне Ленин, Сталин, Орджоникидзе, Свердлов, Спандарйан, Голощекин т. ыт. те кĕнĕ. Сталин тата Свердлов йулташсене Тĕп Комитета заочнă суйланă, мĕншĕн тесен вĕсем ссылкăра пулнă. Тĕп Комитетăн кандидачĕсен шутне Калинин йулташа суйланă.

Российăри ревољуцилĕ ĕçе йертсе пыма практикăлă центр (Русское бюро ЦК) туса хунă, вăл центра Сталин йулташ йертсе пынă. Тĕп Комитетăн Вырăс бўроне, Сталин йулташсăр пуçне, Й. Свердлов, С. Спандарйан, С. Орджоникидзе, М. Калинин, Голощекин йулташсем кĕнĕ.

Прагăри конференци бољшевиксем оппортунисăма хирĕç малтан кĕрешсе пынине пĕтĕмпех итог туса, мењшевиксене партирен хăваласа кăларма йышăннă.

Прагăри конференци, мењшевиксене партирен хăваласа кăларса, бољшевикла парти хăйне уйрăм парти пулассине йĕркеленĕ.

Мењшевиксене идейă тата организаци тĕлĕшпе çĕмĕрсе тăкса, вĕсене партирен хăваласа кăларса бољшевиксем хăйсен аллинче партин кивĕ йалавне — РСДРП-на сыхласа хăварнă. Çавăнпа та бољшевиксен партине 1918 çулччченех Российăри социал-демократла рабочи парти тенĕ, скобкăра — „бољшевиксен" тесе хушнă.

Ленин Прагăри конференцин итогĕсем çинчен Горький патне 1912 çулăн пуçламăшĕнче çапла çырнă:

„Тинех ĕнтĕ, ликвидаторла сволочсем хирĕç тăнине пăхмасăрах, партине тата унăн Тĕп Комитетне тепĕр хут чĕртме май килчĕ. Çакăншăн Есĕр пирĕнпе пĕрле савăнатăр, тесе шанатăп" (Ленин, т. XXIX, стр. 19).

Прагăри конференци мĕнле вырăн йышăннине хакласа, Сталин йулташ калат̆:

„Çак конференци пирĕн партин историнче пит те пысăк вырăн йышăнса тăнă, мĕншĕн тесен вăл бољшевиксемпе мењшевиксем хушшинче йăран хурса, пĕтĕм çĕршыври бољшевикла организацисене пĕрлĕхлĕ бољшевикла партине пĕрлештернĕ" (Стенографический отчет XV с"езда ВКП(б), стр. 361—362).

Мењшевиксене хăваласа кăларса йанă тата бољшевиксем хăйне уйрăм партине йĕркеленĕ хыççăн, бољшевикла парти çирĕпрех те вăйлăрах пулса тăнă. **Парти хăйне оппортунисла елементсенчен тасатнипе çирĕпленет**—çакăнта ĕнтĕ бољшевикла партин, çĕнĕ сăнарлă партин, II Интернационалăн социал-демократла партийĕсенчен принципăн уйăрăлса тăракан партин лозунгĕсенчен пĕри. II Интернационалăн партийĕсем, хăйсене сăмахпа марксисла партисем тесе, чăннипе хăйсем хушшинче марксисăмăн тăшманĕсене, уççăн кĕрешекен оппортуниссене чăтса пурăнса, вĕсене II Интернационала аркатса йама, пĕтерме май панă. Бољшевиксем, йăлтах урăхла, оппортуниссене хирĕç ним килĕшмесĕр кĕрешсе пынă, пролетарилĕ партине оппортунисăм ирсĕрлĕхĕнчен тасатса, çĕнĕ сăнарлă парти, ленинла парти, кайран пролетариат диктатурине çĕнсе илнĕ партине тунă.

Пролетарилĕ парти ретĕнче оппортуниссем йулнă пулсан, бољшевикла парти çул çине тухма пултарайман тата пролетариата хăйĕн хыççăн илсе пыма пултарайман пулĕччĕ, влаçа хăйĕн аллине илсе пролетариат диктатурине тăвайман пулĕччĕ, граждăн вăрçинчен çĕнтерекен пулса тухайман пулĕччĕ, социалисăм туса хурайман пулĕччĕ.

Прагăри конференци хăйĕн решенисенче, партин черетри политикăлă тĕп лозунгĕсем вырăнне хурса, программă-минимум: демократилĕ республикă, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ, помешчиксен çĕрĕсене пĕтĕмпех конфискацилессине кăларса тăратнă.

Çак ревољуцилĕ лозунгсем айĕнче тăрса бољшевиксем IV Государственнăй думăна суйланă чухне суйлав кампанине иртернĕ.

Çак лозунгсем айĕнче рабочи массисен 1912—1914 çулсенчи ревољуцилĕ йухăмăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ пынă.

Кĕске выводсем

1908—1912 çулсем ревољуцилĕ ĕçшĕн пит те йăвăр тапхăр пулнă. Ревољуци параннă хыççăн, ревољуцилĕ йухăм чакнă тата массăсем ывăнса çитнĕ условисенче бољшевиксем хăйсен тактикине улăштарса, патша влаçне хирĕç тўрех кĕрешессинчен çав кĕрешўн тавра çулĕсем çине куçнă. Столыпинла реакцин йăвăр условийĕсенче массăсемпе сыхăнса тăрассине (страховой кассăсемпе профсойузсенчен пуçласа думă трибунĕ таранах) сыхласа хăварма бољшевиксем чи пĕчĕк легаљнай майсемпе те усă курнă. Бољшевиксем ревољуцилĕ йухăмăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ ваљљи канма пĕлмесĕр вăйсем пухнă.

Ревољуци параннин, оппозицилĕ йухăмсем саланса кайнин, ревољуци пулас шанăçа çухатнин, партирен пăрăнса кайнă интеллигентсем (Богданăв, Базарăв тата ыттисем те) партин теорилĕ никĕсĕсене хирĕç ревизионисла кĕрешесси ўснин йăвăр обстановкинче, бољшевиксем çеç партире пĕртен пĕр вăй пулса тăнă, вĕсем парти йалавне чĕркесе хуман, партин программишĕн çирĕп тăнă тата марксисла теорине „критиксем" атакăланине çапса çĕмĕрнĕ (Ленинăн „Материализм и емпириокритицизм" йатлă кĕнеки). Марксисла-ленинла идейăпа писĕхни, ревољуцин малашлăхĕсене пĕлсе тăни Ленин тавра пĕтĕçсе тăнă бољшевиксен тĕп чăмăрне партине тата унăн ревољуцилĕ принципĕсене сыхласа хăварма пулăшнă. „Пире ахаљ мар чул пек çирĕпскерсем тесе йат пачĕç", — тенĕ Ленин бољшевиксем çинчен.

Мењшевиксем вăл тапхăрта ревољуцирен ытларах та ытларах пăрăнса пыраççĕ. Вĕсем ликвидаторсем пулса тăраççĕ, пролетариатăн вăрттăн ĕçлекен ревољуцилĕ партине пĕтерсе хума, тĕп тума хушаççĕ, партин программине, партин ревољуцилĕ задачисемпе лозунгĕсене ытларах та ытларах уççăн пăрахăçлаççĕ, хăйсен, реформисла партине организацилеме хăтланаççĕ, вăл партине рабочисем „столыпинла рабочи парти" тесе йат панă. Троцкий, „парти пĕрлĕхĕн" лозунгĕпе фарисейла витĕнсе, чăннипе ликвидаторсемпе пĕрлĕх тăвас тесе,—ликвидаторсене пулăшса тăрат̆.

Тепĕр йенчен, бољшевиксен пĕр пайĕ, патша влаçне хирĕç кĕрешме çĕнĕ, тавра çулсем çине тăма кирлине ăнланса илеймесĕр, уççăн ĕçлемелли майсемпе усă курассине пăрахăçлама хушат̆, Государственнăй думăран рабочи депутатсене кайала чĕнсе илме хушат̆. Отзовиссем партине массăран уйăрăлса кайма тĕртеççĕ, ревољуцин çĕнĕ çĕкленĕвĕ ваљљи вăй пухма кансĕрлеççĕ. „Сулахай" фразăсемпе витĕнсе, отзовиссем чăннипе, ликвидаторсем пекех, ревољуцилĕ кĕрешĕве пăрахăçлаççĕ.

Ликвидаторсемпе отзовиссем Ленина хирĕç пĕр пĕтĕмĕшле блока, Августовски блока пĕрлешеççĕ, вăл блока Троцкий организациленĕ.

Ликвидаторсене тата отзовиссене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте, Августовски блока хирĕç кĕрешнĕ çĕрте бољшевиксем çиеле тухса, вăрттăн ĕçлекен пролетарилĕ партине ăнăçлăн сыхласа тăраççĕ.

Çав тапхăрти чи паллă событи вăл РСДР Партин Прагăри конференцийĕ (1912 çулти йанвар) пулса тăрат̆. Çав конференцире мењшевиксене партирен хăваласа кăларнă, бољшевиксем мењшевиксемпе пĕр партире формаљнă пĕрлешсе тăрассине йаланлăхах пĕтерсе хунă. Политикăлă группăран бољшевиксем хăйне уйрăм Российăри социал-демократсен (бољшевиксен) рабочи партине йĕркеленеççĕ. Прагăри конференци çĕнĕ сăнарлă партине, ленинисăмăн партине, бољшевикла партине пуçласа йанă.

Пролетарилĕ партине оппортуниссенчен, мењшевиксенчен тасатни,—ăна Прагăри конференци пурнăçа кĕртнĕ,—партипе ревољуцине малала аталантарассишĕн пысăк, татăклă вырăн йышăнса тăнă. Бољшевиксем рабочи клас ĕçне сутакансене, соглашатĕл-мењшевиксене, партирен хăваласа кăларман пулсан, пролетарилĕ парти 1917 çулта пролетариат диктатурине çĕнсе илме массăсене çĕклеме пултарайман пулнă пулĕччĕ.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малалли „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

ПОЛИНĂ ОСИПЕНКО

Тăван çĕршывăн мухтавĕшĕн

Пирĕн вĕçев çинчен нумай каланă ĕнтĕ. Пĕтĕм халăх, правитĕлства, Сталин йулташ хăй те пирĕн вĕçев мĕнле пынине кашни минутрах сăнаса тăнă. Епĕр сĕм тайгана анса ларнă хыççăн, пире шыраса тупса тайгаран илсе тухас тĕлĕшпе геройла ĕçсем тума тытăннă.

Ку статйара епĕ çав вĕçеври ытларах уççăн паларса тăракан темиçе тапхăр çинчен каласа парăп.

Малтанах пирĕн вĕçев пит те лăпкăн, аван пычĕ. Кăнтăрла, тĕттĕмленсе киличчен, самољота Валентинă тытса пычĕ, унтан—епĕ. Омск леш йенче пирĕн маршрутăн чи йăвăр та ответлă участки пулчĕ. Штурвала тытса пыратăп, пире вĕçĕ-хĕррисĕрех пĕр çунат çинчен теприн çине тайăлтарат̆, самољота тўрĕ тытса пыма аран çеç ĕлкĕретĕп.

Епĕр пĕлĕтсем ăшĕнче сакăр сехет хушши нимĕн курмасăр вĕçсе пытăмăр. Çăмăл задача мар—палăртса хунă çулран пĕр пăрăнмасăр пымала. Самољота пилĕк сехет хушши сулларĕ. Епĕр 7.500 метр çўлĕшне хăпарсан тин кăшт тўлекленчĕ. Чăнах та, хăт̆ унта та пĕлĕтсем хушшинче вĕçсе пымала пулчĕ, анчах çапах та сайра-хутран çăлтăрсем курăнкалат̆чĕç.

Радиостанци ĕçлеме пăрахрĕ—ăна вăй парса тăракан умформĕрсем стройран тухрĕç. Пире çул кăтартса параканнисем курс тата вăхăт çеç тăрса йулчĕç.

Хабаровск çинеле çул тытрăмăр. Сасартăк кабинăра хĕрлĕ лампă çутăлса кайрĕ. Ку ĕнтĕ пысăк баксенче бензин пĕтнине, запаслăх илвĕ бензин расхутланма пуçланине пĕлтерет. Çав запаслăх пĕчĕк бакри бензин 30 минут вĕçме кăна çитет.

Пирĕн вĕçевĕн чи йăвăр ответлă тапхăрĕ пуçланчĕ. Валентинă Маринăна приказ пачĕ: унăн парашўтпа сиксе йулас пулат̆.

Маринă сикнĕ хыççăн парашўта час уçса йамарĕ, вăл хăш вырăна анса çитнине епĕ лайăхах куртăм. Çак вăхăтра ĕç çăмăл марччĕ: йулашки бензин пĕтсе килни çинчен хĕрлĕ лампă хăратса астутарат̆, мотор ĕçлемест, винтсем хăйсен инерцийĕпе кăна çаврăнаççĕ, а пирĕн айра хăйамат пĕлет-и мĕскер, темĕнле шурлăх...

Епĕр машинăна тўрлетрĕмĕр, винтсем çĕре тивмеле ан пултăр тесе, кирлĕ пек хатĕрлентĕмĕр те, анса ларма шутланă çĕреле çул тытрăмăр. Ăнăçлă анса лартăмăр, хаљ ăна пурте пĕлеççĕ. Машинă çинче пĕр винт та çĕмĕрĕлмен.

Ака ĕнтĕ епĕр иккĕнех шурлăх çинче, иртсе тухма çук сĕм тайгара. Çак вăхăтра çын туслăхĕ мĕне пĕлтернине епĕ уйрăмах вăйлăн туйса илтĕм. Çак событине кирлĕ пек таранăн шухăшласа тавçăрса пăхма пит сахал вăхăт иртнĕ-ха. Анчах туслăхăн аслă хăвачĕ хаљхи вăхăтра маншăн чи вăйли пек туйăнат̆, ăна епĕ хамăр вĕçевре йаланах туйса тăтăм. Пĕр-пĕриншĕн мĕнле ăшшăн тăрăшман пуљ епĕр. Ана курмасăр ăнланса илме те йăвăр.

Çĕрле епĕр кашни икĕ сехет урлă улшăнса дежурта тăма шут тытрăмăр. Икĕ сехет хушши Валентинă хураллат̆, икĕ сехет—епĕ. Хураллатăн, а хăв тĕрĕслетĕн: тусу çывăрат̆-и. Вăл та çавăн пекех. Пырат̆ те ăшăрах чĕркесе, татах мĕнпе те пулин витсе хăварат̆. Çывăрнă епĕр кабинăра. Пĕр-пĕрне ăшă тумтир илтересшĕн ўкĕтлесе калаçса пирĕн сахал мар вăхăт иртнĕ.

Виç-тăват кун хушши епĕр вĕри апат çимен. Мĕн те пулин тутлăраххи çисе пăхас килет. Епĕ лайăх хуçайкă пулса тăтăм, консервăсенчен лайăх хуратул пăтти пĕçерсе хатĕрлерĕм. Запаслăх илнĕ консервăсем пурччĕ пирĕн. Консервăсем пит лайăхчĕ.

Статйа вĕçĕнче пирĕн самољота конструкциленĕ, туса хатĕрленĕ йулташсем çинчен темиçе сăмах каласа хăварасшăн. Хамăр самољот конструктăрĕ инженер Сухой йулташа, унăн чаплă помошникĕсене—инженерсене Фомин, Фељснер, Воскресенский йулташсене, хамăр самољота туса çул çине тухма хатĕрленĕ ытти нумай йулташсене мĕн тери тав туса аса илмен пуљ епĕр.

Вĕçев штабĕ тата ун тавра пĕрлешсе тăракан вуншар чаплă работниксем пире ĕçлеме аванрах, канăçлăрах пултăр тесе, мĕн кирлине йăлтах тунă.

Михаил Моисейĕвич Каганович пирĕн вĕçеве организациленĕ чухне вак-тĕвек ĕçсемшĕн те тăрăшса, пире мĕн кирлине йăлтах туса парассишĕн тўррĕмех хăй тăрăшса, нумай кас çывăрмасăр иртернĕ.

Пирĕн самољот пĕр кăлтăксăр ĕçлерĕ.

Çавăн пек машинăсем тума пĕлекен йулташсене—мухтав!

Хамăрăн тусăмăра тата учитĕле, пире çĕнĕрен çĕнĕ паттăр ĕçсем тума хавхалантăрма пĕлекен çыншăн атте пек тăрăшакан Сталин йулташа мухтав!

ХĔРЛĔ ÇАР ПУРНĂÇĔ

Красноармейĕцсем ăмăртаççĕ

Пĕрремĕш Хĕрлĕ йалавлă уйрăм армин подразделенийĕсенче Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту вăйланса пырат̆. Кунта красноармейĕцпа красноармейĕц, отделенипе отделени, взводпа взвод, ротăпа ротă, политикăпа çар ĕç техникине отличнă вĕренме пулса, пĕр пĕринпе социалисăмлă ăмăртăва тухнă. Ăмăртăва хутшăннăранпа лейтенант Медведĕвпа Одинцов т. ыт. йулташсем те йертсе пыракан взводсем пур йенчен те дисциплинăлă пулса отличнă вĕренеççĕ. Медведĕв йулташ йертсе пыракан взводри кĕçĕн командир Мирошниченко йулташ отделенинчи красноармейĕцсене çар ĕç техникине лайăх вĕрентет. Красноармейĕцсем Устўков, Степин, Романенко, Поветкин т. ыт. йулташсем те радио ĕçне отличнă вĕренеççĕ.

Лейтенант Медведĕв йулташ кашни кунах красноармейĕцсене ăмăрту договăрĕ мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни çинчен каласе парат̆, вăл кашни минута усăлă иртерме тăрăшат̆. Çак ĕçсемшĕн халĕ лейтенант Медведĕв йулташа ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа тунă хисеплĕ хĕрлĕ хăма çине кĕртнĕ.

М. Архипăв.

Октăбĕр уйавĕ умĕн

** ТРАК. Уйкас Йунтапари „Çĕнĕ пурнăç" колхоз правлени ĕнесĕр колхозниксене 6 пăру илсе пачĕ.

И. Дмитрийĕв.

** КУЙБЫШĔВ ОБЛАÇĔ. Старо Ибрайкинăри Саккопа Ванцетти йачĕпе тăракан колхозра 1938 çулти йалхуçалăх çулĕнче лайăх ĕçленĕ колхозниксемпе колхозницăсене Октăбĕр уйавĕнче премилеме укçа-тенкĕ уйăрса панă.

Д. И. Имангулăв

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Райком партилӗ-политикӑлӑ ӗҫе йертсе пыман

ШӐХАСАН. Парторганизацин районри пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху чӑваш парторганизацин XIX-мӗш конференци ӗҫӗсем ҫинчен сӳтсе-йаврӗ. Докладне райком ҫекретарӗ Никитин йулташ туса пачӗ. Доклад тӑрӑх каласма 46 ҫын ҫырӑнчӗҫ, 31 ҫын тухса каларӗҫ. Тухса калакансем пурте XIX-мӗш конференци решенисене ырларӗҫ. Ҫавӑнпа пӗрлех районри парторганизацинчи, советпа хуҫалӑх организацисенчи ҫитменлӗхсене кӑтартса пачӗҫ.

Йефремӑв, Трофимӑв йулташсем райком работникӗсем партин пуҫламӗш организацисенче час-час пулманни ҫинчен, вӗсене ҫителӗклӗ пулӑшманни ҫинчен каларӗҫ. Райком ҫекретарӗсем йалсенче пулсан йалсовет председателӗпе каласнипех, парторгпа каласмасӑрах, кайнисем пулнӑ.

Районра агитколлективсем начар ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен ӗҫне райком ҫителӗклӗ йертсе пымаст̆. Агитколлективсен руководителӗсене парти райкомӗ ҫирӗплетнӗ. Анчах вӗсемпе семинар туса ирттермен. Агитатӑрсене тупса ҫитерсе райкомра ҫирӗплетмен.

Парти организаци комсомола сахал пулӑшат̆. Халӗ комсомол организацисенче ПСҪЛКС Тӗпкомӗн VI-мӗш пленумӗпе Чӑваш обкомӗн IV-мӗш пленумӗн решенисене сӳтсе-йавасси йапӑх пырат̆. Парти чӑваш организацин XIX-мӗш конференци решенине сӳтсе-йавма та пуҫламан. Вӑл решенипе комсомол активне те паллаштарман. Ҫапла майпа комсомолӑн отчотпа суйлав пухӑвӗсем кирлӗ пек иртсе пыма пултараймаҫҫӗ. Райкомол аппаратӗнче дисциплинӑ ҫук.

Районри колхозсенче пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Тырпула ҫапса пуҫтарса кӗртес ӗҫ пӗтмен-ха. Выл̆ӑхсене хӗле хатӗрлес тӗлӗшпе ӗҫсем начар пыраҫҫӗ. Ӑваспӳрт Кипеч колхозӗн ферминче вите ҫук пирки 150 сысна тултах пурӑнаҫҫӗ. „III Интернационал“ колхозра 5 кӗсре хӑм парахнӑ. Райҫӗрӗҫ пайӗ колхозсене кирлӗ пек йертсе пыраймаст̆. Йулашки вӑхӑтра йалсенче револ̆уцилӗ саккунлӑха пӑснисем палӑраҫҫӗ.

Пуху районри финанс пайӗ, сывлӑха сыхлав пайӗ, Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн уполномоченнӑйӗ ҫителӗксӗр ӗҫлесе пынине палӑртрӗ. Кунпа пӗрлех парти райкомӗ районри совет тата хуҫалӑх организацисен ӗҫӗсене ҫителӗксӗр йертсе пыни ҫинчен те каларӗҫ.

МТС-че уйӑх ытла директӑрӑн политикӑ йенӗпе ӗҫлекен заместителӗ ҫук. Ҫавӑнпа трактӑриссем хушшинче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫ начарланнӑ.

Пуху XIX-мӗш конференци решенине ырласа, вӑл решенисене пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫа кӗртсе пыма йышӑнчӗ.

С. Соколов.

Кӗрешӳве мобилизацилемен доклад

ПСК(б)П Чӑваш облӑҫ организацин XIX-мӗш конференцийӗ пулса иртни 18 кун ҫитсен, Куславкка районӗнчи парторганизацин пухӑвӗ пулчӗ. Кун умӗн, окт̆абӗрӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа, конференцин итогӗсене районти пур пуҫламӗш организацисенче те сӳтсе-йавнӑ.

Халӗ ӗнтӗ, конференцин итогӗсене сӳтсе-йавнипе пӗрлех, конференци хушнисене ӑнланса илсе, ӗҫе тӗпрен ҫӗнетме тытӑнни ҫинчен те сӳтсе-йавмала пекчӗ. Анчах пухура вӑл курӑнмарӗ. ПСК(б)П райкомӗн ҫекретарӗ Желтухин йулташ хӑйӗн докладне ытларах: — кӑна туман, ку ӗҫ начар пырат̆, ку ҫителӗксӗр, кӑна тултарман, кӑна парса татман—тенӗ сӑмахсемпе тултарчӗ.

Кун пек калание коммуниссем кӑҫалхи май уйӑхӗнче пулса иртнӗ отчотпа суйлав пухӑвӗнче, райком ҫекретарӗ пулнӑ Антонӑв йулташ доклад тунӑ чухнех илтнӗччӗ. Халӗ Желтухин йулташ та ҫав кӗввех тӑсма хӑтланат̆.

Парти ретне ӳстерес ӗҫе илсен, августӑн 18-мӗшӗнчен пуҫласа 18 ҫын илнӗ. Вӑл шутра 1-мӗшпе II-мӗш категорипе илни пӗр ҫын та ҫук. Хӑшпӗр пуҫламӗш организацисенче („Ленин йалавӗ“ редакци ҫумӗнчи организаци) пӗр ҫын та партине илмен. Тата партине кӗме зайавлени панӑ йулташсен документӗсене йӗркелес ӗҫ тепӗр чухне тӳсме ҫук тӑсӑлса пырат̆. Кудрйавцӗв йулташ документӗсене Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн уполномоченнӑйӗ ҫумӗнчи пуҫламӗш организаци феврал̆ уйӑхӗнченпе йӗркелесе параймаст̆. Мишин йулташ зайавленине райком бӳровӗнче тӑватӑ хут лартса аран пӑхса тухнӑ. Виҫӗ ларӑвне рекомендаци панӑ йулташсем пыман.

Хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен илсе пӑхсассӑн, комбинат прорывра. Кӗрхи сухана 11 пин гектартан 7 пин гектар ҫеҫ сухаланӑ. Государствӑ умӗнчи парӑмсене парса татман. Пуринчен ытла, ҫӗрулми обйазательствине тултарас ӗҫ йапӑх пырат̆. Суту-илӳ ӗҫӗнче растратӑ чакмаст̆-ха. Растратӑ тунӑ ӗҫсене прокуратура органӗсем васкавлӑ пӑхса тухайманни курӑнат̆. Сӑмахран, Туканаш йалӗнчи лавкара сутӑ тӑвакан Орлов 6 пин тенкӗ таранччен пухат̆ те, банка хывма кайатӑп тесе, тухса кайат̆. Ҫул ҫинче хӑйне-хӑй тӑрмаласа пӗтерсе мана ҫаратрӗҫ тесе йат сарат̆. Прокуратура органӗсем ҫак ӗҫе тӗплӗн йӗрлесе тӗрӗслесе тупас вырӑнне икӗ лесник хупса лартаҫҫӗ. Ҫав хушӑрах Орлов татах 5 пин те 500 тенкӗ варлат̆. Ҫитменлӗхсем ҫинчен тишкерни питех кирлӗ ӗҫ, питех те пархатарлӑ ӗҫ. Анчах, ҫитменлӗхсене кӑтартса ларни ҫеҫ мар, вӗсен сӑлтавне шыраса тупса вӑл ҫитменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтерме тӑрӑшас пулат̆.

Ӗҫсене малала йарас пулсан примерлӑ ӗҫлекен организацисен опытне ытти организацисене пама тӑрӑшмала. Районта примерлӑ ӗҫсем сахал мар. Акӑ, Катӗркасси колхозӗ аш-какайӑн кӑҫалхи обйазательствине тултарса 1939 ҫулшӑн та 60 процент панӑ. Укҫа-тенкӗ 100 процент тӳлесе татнӑ. Кӗрхи сухана августӑн 27-мӗшӗнчех сухаласа пӗтернӗ. Авӑна августӑн 13-мӗшӗнче ҫапса пӗтернӗ. Клевӑр вӑрлӑхне ҫентт̆абӗрӗн 10-мӗшӗнче ҫапса илнӗ. Арманшӑн кӗреҫе ҫӑнӑхне 1939 ҫулшӑн 50 процент панӑ. Государства памалли тырра, натурплатӑна тахҫанах парса татнӑ.

Катӗркасси колхозне коммунис Волкӑв йулташ йертсе пырат̆. Мӗншӗн-ха вӑл колхоз ҫинчен, Волкӑв йулташ мӗнле меслетсемпе ӗҫлесе ҫав тери пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ опыта ытти колхозсен хушшине сарас мар? Ку колхоз ҫеҫ мар, районта лайӑх ӗҫлекен колхозсем татах пур. Сӑмахран, Аманик, Чӑнкасси колхозӗсем. Анчах Желтухин йулташ хӑйӗн докладӗнче ҫак примерлӑ лайӑх ӗҫсем ҫинчен калаҫа кӑтартмарӗ.

Тата районра Окт̆абӗр уйавӗ умӗнхи социалисӑмлӑ ӑмӑртуне сӑрӑлса пыни ҫинчен пӗр сӑмах та каламарӗ. Халӑх тӑшманӗсен сӑтарла ӗҫӗсен йулашкисене тӗппипех пӗтерес ӗҫ районра мӗнле пыни ҫинчен, малалла мӗн тумалли ҫинчен те татӑклӑ, тӗллевлӗ калани пулмарӗ. Ҫавӑнпа, пӗтӗм доклад ӗҫе тӗпрен ҫӗнетес, ҫитӗнӳсемшӗн кӗрешӳве мобилизацилемен доклад пулмарӗ, — тесе тухса калакан йулташсем тӗрӗс каларӗҫ.

Мраҫка.

ПСК(б)П Ворошиловски хула комитече (Орджоникидзе крайӗ) ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне вӗренекен кружоксене ертӳҫӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе пропагандиссен семинарне организациленӗ.
ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Парти активӗн тӗнчи консультанчӗ В. М. Кл̆укина учебникӑн пӗрремӗш сыпӑкӗ тӑрӑх пропагандиссемпе калаҫу иртерет. Сулахайран сылтӑмала: П.А. Копиносенко, В. М. Кл̆укина, З. Ф. Несудахата, А. А. Дворниченко тата Н.Д. Анохин (ура ҫинче тӑрат̆).

Б. Гурейӗв фото-ӳкерчӗкӗ („Пресклише“)

Политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫ ҫителӗксӗр пулнӑ

ЙӖПРЕҪ. Окт̆абӗрӗн 20-мӗшӗнче вӑрманпромхозри комсомол комитечӗн отчотпа суйлав пухӑвӗ пулса иртрӗ.

Комсомол комитечӗ пухӑва начар хатӗрленнӗ. Пуху пулассине ҫинчен комсомолӗҫсене 2—3 кун малтан пӗлтерсе хуман. Ҫавна пула комсомолӗҫсем пухӑва вӑраххӑн пухӑннӗҫ. Пуху 6 сехетре уҫӑлмалӑскер 8 сехет тӗлне аран-аран уҫӑлчӗ. Комитет ҫекретарӗн заместителӗ Чугунова хӑй те 7 сехет иртсен тин пычӗ.

Комсомол комитечӗн ӗҫсем ҫинчен комитет ҫекретарӗ Чернов йулташ отчот туса пачӗ. Чернов отчотна начар хатӗрленнӗ. Вӑл хӑйӗн отчотӗнче комсомол комитечӗ мӗнле ӗҫлесе пынине тулли фактсемпе кӑтартса пама пултараймарӗ.

Вӑрманпромхозри комсомол комитечӗ ҫак ҫулти май уйӑхӗнче организациленнӗ. Май уйӑхӗнченпе пӗр пуху ҫеҫ иртернӗ, комитет ларӑвӗ 3 пулнӑ. Ҫак 6 уйӑх хушшинче пӗр ҫамрӑка (Жаварӑнкӑва) комсомола илнӗ, анчах вӑл та пулин „йӑпӑлӑ“ пулман. Жаварӑнкӑв ӗҫсе ӳсӗрӗлсе ашкӑнса ҫӳрекенскер пулнӑ. Вӑл комсомол кӗрсен те ӗҫме, ашкӑнса ҫӳреме пӑрахман. Ҫакӑн хыҫҫӑн Жаварӑнкӑва комсомолтан кӑларнӑ.

Жаварӑнкӑв мӗншӗн пӑсӑлса кайнӑ? Ӑна комсомол ӗҫне йӑваҫтарман, порученисем паман. Ҫавна пула та ӗнтӗ Жаварӑнкӑв комсомолран уйӑрӑлса кайнӑ.

Комсомол хуҫалӑхне йухатнӑ. Комсомол документӗсене упрама уйрӑм шкап, йе ешчӗк ҫук.

Комсомолта тӑман ҫамрӑксем хушшинче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫ пулман.

Комсомол комитечӗ вӑрман хатӗрлев планне срукчен тата пысӑк пахалӑхпа тултарас ӗҫре социалисӑмлӑ ӑмӑртуна стахановла йухӑма йертсе пыман. Комсомолӗҫсем пӗрпӗринпе ӑмӑртмаҫҫӗ, комсомол комитечӗ те нихӑш организаципе те ӑмӑртмаст̆. Социалисӑмлӑ ӑмӑртуна стахановла йухӑма тата политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе ҫителӗксӗр сарса пынине пула, вӑрманпромхоз 9 уйӑхри вӑрман хатӗрлев планне 50 процент та тултараймарӗ.

Сӑтарла ӗҫсен йулашкисене пӗтерес тӗлӗшпе комсомол комитечӗ чылай ӗҫсем туса иртернӗ, анчах ку ҫителӗксӗр-ха. Сӑтарла ӗҫсен йулашкисем вӑрман хуҫалӑхӗнче халӗ те пур. Акӑ, автобазӑра кулак ывӑлӗ Лоскутӑв шофӗрте ӗҫленӗ. Лоскутӑв ӗҫре пысӑк чӑрмавсем кӳрсе пынӑ пулсан та, ӑна стахановӗҫсен шутне кӗртнӗ, мухтанӑ, премисем панӑ, курорта йанӑ.

Ҫавӑн пекех Буинскри обозра та лашасене выҫӑ усраса ырханлантарнӑ, лашасем чирленӗ, 16 лаша вилнӗ. Анчах ҫавна комсомол организаци курман.

Пуху комсомол комитечӗн ӗҫне ҫителӗксӗр тесе хакларӗ. Вӑрттӑн (хуппӑн) сасӑласа виҫӗ ҫынтан комитет суйларӗ.

Дм. Михайлӑв.

Кӗрхи ҫӗртме

Ӗҫе вӑраха йама йурамаст̆

(Йалкорсен ҫырӑвӗсем тӑрӑх)

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, кӗрхи ҫӗртме тӑвас плана окт̆абӗрӗн 1-мӗш тӗлне тултармала пулнӑ. Анчах, уйрӑм колхозсем тата районсем правителӗствӑ кӑтартса панӑ срук тӗлне кӗрхи ҫӗртме планне тултараймарӗҫ. Окт̆абӗрӗн 25-мӗшне республикӑра кӗрхи ҫӗртме планне пурӗ 71,1 процент, МТС-сем трактӑрсемпе сухаламалли планна 45,5 процент ҫеҫ тултарнӑ. Уйрӑм районсенче тата колхозсенче кӗрхи ҫӗртме вӑйлӑ тырпул никӗсӗ пулса тӑнине хакламан пирки, ку ӗҫ пирӗн республикӑра кайа йулчӗ.

Йалкорсем ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, вырӑнсенче кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫ ҫаплах йапӑх пырат̆. В. Белов йалкор пире ҫапла пӗлтерчӗ:

Вӑрнар районӗнчи Тури Карачурари «Ленин ҫулӗпе» колхозӑн, райҫӗрӗҫ пайӗн планӗ тӑрӑх, 210 гектар ҫинче кӗрхи ҫӗртме тумалла пулнӑ пулсан, 90 гектар ҫеҫ сухаланӑ. Кӗрхи ҫӗртме тӑвас ҫӗрте куллен 23 лашапа ӗҫлес вырӑнне 7-8 лашапа ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ.

Анат Карачурари «Социалисӑм ҫулӗпе» колхоз (ҫав районах) татах та начар ӗҫлет. Кунта 37 гектар кӑна кӗрхи ҫӗртме тунӑ.

Ф. Миронӑв йулташ ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, Шурҫырма йалсоветӗнчи (Трак р.) Йуркин йачӗпе тӑракан тата „Майӑн 1-мӗшӗ“ колхозсем ку вӑхӑтченех кӗрхи ҫӗртме тума тытӑнман.

Йӗпреҫ районӗнчи Бугуйанти Кирӑв йачӗпе тӑракан колхоз та кӗрхи ҫӗртме тума пуҫӑнман. Правленинче ӗҫлекенсем: лашасем пушӑ мар, теҫҫӗ. Чӑннипе лашасем ирӗкре ҫӳреҫҫӗ. Ҫакӑ ӗнтӗ Кирӑв йачӗпе тӑракан колхозра кӗрхи ҫӗртме тӑвассине хирӗҫ пынине уҫҫӑнах кӑтартса парат̆. (Г. Никифӑрӑв).

Хал̆ пур ҫӗрте те Окт̆абӗр уйавӗ умӗнхи социалисӑмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырат̆. Ӑмӑртӑва хутшӑнса, кӗрхи ҫӗртме планне пурин те, кашни колхозӑн тултарма тӑрӑшмала.

Пӗтӗм вӑйа кӗрхи ҫӗртме тунӑ ҫӗре!

Кӗрхи ҫӗртме сухи тӑвасси пайанхи кунччченех йулса пырат̆. Окт̆абӗрӗн 25-мӗшне республикӑра плана 71,1 процент ҫеҫ тултарнӑ. Плана пӗтӗмпех тултарма тата 81.155 гектар сухалас пулат̆.

Партин облӑҫри XIX-мӗш конференцийӗ кӗрхи ҫӗртме сухине ҫитес ҫывӑх кунсенчех туса пӗтерме трактӑрсемпе тата колхозсенчи туртӑм вӑйӗсемпе анлӑн усӑ курма хушса хӑварчӗ. Анчах хал̆ те татӑклӑ улшӑнусем тунийех курӑнмаст̆. Кӗрхи ҫӗртме сухи тӑвасси чылай районсенче иртнӗ кунсенчи пекех хӑй тӗллӗн пулса пырат̆. План тӑрӑх, Хӗрлӗ Чутай районӗн 10 пин гектар ҫинче кӗрхи ҫӗртме туса хӑвармала пулнӑ пулсан, окт̆абӗрӗн 25-мӗшне пурӗ те 3.124 гектар кӑна сухаланӑ. Иртнӗ пилӗккунлӑхра, вӑтамӑн илсен, кунне 23-шер гектар ҫеҫ сухаланӑ.

Районсенчи партипе совет организацийӗсем кӗрхи ҫӗртме планне хӑварт тултарса ҫитерессишӗн оперативлӑн йертсе пыни курӑнмаст̆, вӗсем халиччченех ҫӗрӗҫ пайӗсем ҫине шанассине пӑрахман. Ҫавна пула ӗнтӗ республикӗпе те талӑкне вӑтамӑн 364-шар гектар кӗрхи ҫӗртме туса пыма тытӑннӑ. Уйрӑм районсенче (Вӑрнар, Кувакинӑ, Сӗнтӗрвӑрри, Йелчӗк тата Шупашкар) кӗрхи ҫӗртме сухи тӑвасси ҫак иртнӗ пилӗккунлӑхра пачах чарӑнса ларнӑ. Вырӑнсенче кӗрхи ҫӗртме сухине тумасӑр саботаж тӑвакансемпе пачах кӗрешмеҫҫӗ.

Кӗрхи ҫӗртме планне пӗтӗмӗшпех тултарма пирӗн республикӑра пур условисем те ҫителӗклӗ, ӗҫре бол̆шевикла ҫирӗплӗхпе йертсе пыни кӑна кирлӗ. Шӑнкӑртам районӗ ҫӗртме планне окт̆абрӗн 20-мӗш тӗлне ытлашшипех тултарчӗ. Пллансене тултарасси патне Ҫӗрпӳ тата Елӗк районӗсем ҫывхарса пыраҫҫӗ. Мӗншӗн ыттисен те малта пыракан районсем пек ӗҫлемелле мар? Плана тултарма мӗн чӑрмантарат̆? Пӗтӗм сӑлтавӗ—хуҫалӑхлӑ задачӑсене политикӑлӑ ӗҫсемпе ҫыхӑнтарса пыманнинчен ҫеҫ килнӗ. Акӑ, Тутаркас районӗ окт̆абӗр уйӑхӗн малтанхи кунӗсенчех кӗрхи ҫӗртме сухи тӑвассипе республикӑра чи кайа йулнӑ район шутланаччӗ. Окт̆абӗрӗн 15-мӗшне кӗрхи ҫӗртме планне пурӗ те 26,1 процент ҫеҫ тултарначчӗ. Ҫак иртнӗ вунӑкунлӑхра вӗсем кунне вӑтамӑн 658 гектар ытларах сухалса пырса окт̆абӗрӗн 25-мӗшне плана 71,5 процент тултарчӗҫ.

Кашни районӑн, кашни МТСтанцин, колхозӑн чысла задачи вӑл—кӗрхи ҫӗртме планне ҫак кунсенче тултарса ҫитересси пулат̆.

Окт̆абӗрӗн 25-мӗшне республикӑра кӗрхи ҫӗртме планне мӗн чухлӗ тултарнине кӑтартакан сводкӑ (процентпа)

Улатӑр	80,8
Елӗк	95,7
Патӑрйел	73,3
Вӑрнар	73,3
Йӗпреҫ	70,5
Ишлей	52,3
Канаш	61,5
Куславкка	84,5
Кувакинӑ	71,2
Хӗрлӗ Чутай	31,2
Сӗнтӗрвӑрри	71,8
Пӑрачкав	66,5
Турхан	58,4
Тутаркас	71,5
Трак	62,2
Вӑрмар.	58,7
Ҫӗрпӳ	98,1
Шупашкар	53,4
Шӑмӑршӑ	82,9
Шӑхасан	72,6
Шӑнкӑртам	101,8
Ҫӗмӗрле	70,2
Йетӗрне	67,1
Йелчӗк	81,9
Тӑвай	68,0

Чӑваш АССР-пе 71,1

ПСҪЛКС 20 ҫул тултарнӑ тӗле

Совет ҫамрӑкӗсен пурнӑҫа кӗнӗ прависем

Ленин—Сталин партийӗ револ̆уцилӗ ҫамрӑксем ҫине пур чухне те калама ҫук пысӑккӑн ҫавӑрӑнса пӑхнӑ.

Совет ҫамрӑкӗсем Ленинла-Сталинла комсомол йертсе пынипе бол̆шевиксен партийӗ хӑй ҫине йуратса, шанса пӑхнине граждӑн вӑрҫи фрончӗсенче паттӑрӑн кӗрешнипе, социалисӑм строителӗствин пур фрончӗсенче те паттӑрӑн ӗҫленипе, партин тата халӑхӑн тӑшманӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пӗтернипе ответленӗ.

Сталинла Конституци пӗтӗм совет халӑхӗ вал̆л̆и, мӗн пур совет ҫамрӑкӗсем вал̆л̆и ӗҫлев, кану, вӗренӳ прависене ҫирӗплетсе пачӗ.

Совет халӑхӗ социалисӑм ҫӗршывӗнчи ҫамрӑк ӑру представителӗсем ҫине пысӑк шанӑҫ хурат̆.

ССРС Верховнӑй Советне суйланӑ депутатсенчен 30 ҫул таранччченхи ҫынсем 284; РСФСР Верховнӑй Советне суйланӑ депутатсем хушшинче 24 ҫултан пуҫласа 30 ҫула ҫитиччченхисем 100 ҫын, 21 ҫултан пуҫласа 25 ҫула ҫитиччченхисем 57 ҫын тата 18 ҫултан пуҫласа 20 ҫула ҫитиччченхисем 10 ҫын.

ССРС Верховнӑй Советне суйланӑ депутатсем хушшинче ҫамрӑк патриотсем нумай, вӗсен йачӗсене пӗтӗм ҫӗршыв пӗлсе тӑрат̆: Петр Кривонос, Вал̆ӑ Хетагурӑвӑ, Пашӑ Ангелинӑ т.ыт. РСФСР Верховнӑй Советне Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи паттӑр пограничниксене: Абысов, Дудин йулташсене, Амур ҫинчи Комсомол̆ск хулине чи малтан тӑвакансенчен пӗрине Кочетков йулташа, Совет Сойузӗн Геройӗсене Михаил Йудин танкиста тата Иван Лакейӗв л̆отчика, Зинаидӑ Федӑрӑвӑ стахановкӑна, Марийӑ Кропачевӑ учителницӑна, карапсем тӑвакан рабочийе Михаил Андрейӑва, хурҫӑ шӑратакан рабочийе Александр Сергейӗва тата ыттисене те суйланӑ.

Ҫамрӑксен чи лайӑх представителӗсене сойузлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсене суйланӑ. Суйланнисем хушшинче хӗрсем те нумай. Киргиз республикӗнчи стахановкӑ-колхозницӑ 23 ҫулхи Кул̆джамил̆а Майлийӗвӑ, Бакури промыслӑсенчи комсомолкӑ-инженер Рухсара Садыховӑ, Таджикистанӑн чи лайӑх стахановкисенчен пӗри Саломат Саидӑвӑ, Узбек халӑхӗн ҫамрӑк хӗрӗ Рыхси Халмухамедӑвӑ тата нумай ыттисем те.

Вӗсем пурте совет ҫамрӑкӗсен халӑх шаннӑ малта пыракан представителӗсем, вӗсене халӑх шанат̆. Вӗсем государствӑ ӗҫӗнчи ленинла-сталинла сӑнарлӑ ҫыннисем пулма вӗренсе ҫитӗнеҫҫӗ.

Совет ҫамрӑкӗсем парти йертсе пынипе ҫӗршыва индустриализацилессишӗн, йалхуҫалӑхне коллективизацилессишӗн пынӑ кӗрешӳре, хамӑрӑн социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыва чечеклентерессишӗн пынӑ кӗрешӳре чӑн-чӑн тӗлӗнмеле пысӑк ӗҫсем турӗҫ.

Комсомолӗцсем тата сойузра тӑман ҫамрӑксен чи лайӑх представителӗсем стахановла йухӑма пуҫаракансем пулчӗҫ. Ҫамрӑк шахт̆ор Алексей Стахановӑ ҫӗркӑмрӑк кӑларас ӗҫре пӗтӗм тӗнчипе рекорд турӗ. Кривонос, Огнӗв, Богданӑв комсомолӗцсем чукуҫул транспӑртӗнче стахановла йухӑма пуҫарчӗҫ. Ҫамрӑк ткачихӑсем Маруҫӑпа Дуҫӑ Виноградӑвӑсем ҫӑмӑл промышлӗннӑҫра стахановла йухӑма пуҫараканӗсем пулчӗҫ. Блидмӑн комсомолӗц, нумай пулмаст̆ Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Йалав орденне илнӗскер, шывҫул транспӑртӗнче грузсене тийес-пушатас ӗҫре стахановла чаплӑ май туса панӑ.

Хапрӑксенче, савӑтсенче, рудниксенче, колхозсемпе совхозсен уйхирӗсенче, ҫар чаҫӗсенче стахановла йухӑмра пуҫарулӑ ӗҫсем тунӑшӑн советӑн ҫӗршер ҫамрӑк гражданинӗсене тӗрлӗ орденсем панӑ.

Совет ҫамрӑкӗсем хӑйсен ӗҫ пахалӑхне пӗр чарӑнмасӑр ӳстерсе лайӑхлатаҫҫӗ, совет ҫӗршывӗн индустрилӗ вӑй-хӑвачӗшӗн кӗрешес ӗҫре ҫӗнӗ пуҫару тума тӑрӑшаҫҫӗ.

Мускаври Сталин йачӗпе тӑракан автосавӑтра чаплӑ ӗҫ пуҫарчӗҫ, вӗсем ПСҪЛКС 20 ҫул тултарнӑ тӗле тӑван ҫӗршыв-аннемӗр вал̆л̆и лайӑх парнесем хатӗрлеме чӗнчӗҫ.

Сталинск облӑҫӗнчи 3 пин комсомолӗц-шахт̆орсем вӗсен чӗнӗвне йышӑнса ҫӗркӑмрӑк кӑларас ҫулт̆алӑкри плана ҫент̆абӗр уйӑхӗнчех тултарнӑ, Ленинградри Ижорск савӑтӗнчи ҫамрӑксем Ленинла-Сталинла комсомолӑн мухтавлӑ йубилейӗ йачӗпе вунӑ комсомол бригади, виҫӗ комсомол смени тунӑ, вӗсем программӑна тӑтӑшах ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ. Комсомолӗцсен монтаж цехӗнчи маҫтӑр Корнилӑв (Инҫет-Хӗвелтухӑҫ крайӗнчи Краснайа речка деповӗ) нормӑна кулленех 700 процент тултарат̆; Сучанри 1—19 шахтӑн кӑнтӑр участкин начал̆никӗ комсомолӗц Иван Гладунов нормӑпа куллен 90 тоннӑ ҫӗркӑмрӑк парас вырӑнне 140—180 тоннӑ парат̆. Колхоз ҫамрӑкӗсем те тӑван ҫӗршыв-аннемӗр вал̆л̆и чаплӑ парнесем нумай хатӗрленӗ.

Совет ҫамрӑкӗсем аван та пуйан пурӑнасси тӑтӑшах ӳссе пырат̆.

Окт̆абӗрти Социалисӑмлӑ револ̆уци 20 ҫул тултарнӑ тӗле Мускаври Сталин йачӗпе тӑракан савӑтра анкетӑ туса иртернӗ. Вӑл анкетӑ ҫакна кӑтартнӑ: савӑтра 2—4 ҫул ӗҫлекен ҫамрӑк рабочисем 29,3 процент, вӗсем уйӑхра 300 тенкӗрен пуҫласа 400 тенкӗ таран ӗҫлесе илеҫҫӗ. Ҫав группӑрах тӑракан 29,2 процент ҫамрӑк рабочисем 400 тенкӗрен пуҫласа 500 тенкӗ таран ӗҫлесе илеҫҫӗ, 10,3 процент 500 тенкӗрен ытларах илеҫҫӗ. Чи лайӑх стахановӗцсен ӗҫукҫи тата ытларах.

Хапрӑксемпе савӑтсенчи ҫамрӑк стахановӗцсенчен колхоз уй-хирӗсенчи стахановӗцсем те йулмаҫҫӗ. Чӑваш республикӗнчи Ленин йачӗпе тӑракан колхозри колхозник-комсомолӗц Панфилӑв кӑҫал 1.100 пӑт тырӑ тата 2.431 тенкӗ укҫан ӗҫлесе илнӗ.

Ленин калана пек, ҫамрӑк ӑрӑвӑн 4/5 пайне патша влаҫӗ хутла вӗрентмесӗр хӑварнӑ, ҫӗршывра пӗрремӗшпе иккӗмӗш пилӗкҫуллӑхсенче халӑха вӗрентес ӗҫе 50 мӗлйард тенкӗ йанӑ. Совет Сойузӗнчи мӗнпур ҫамрӑк ӑру шкулта вӗренет. 1937 ҫулта ҫӗршывӑн пуҫламӗш тата вӑтам шкулӗсенче 28 мӗлйун та 842 пин ача вӗреннӗ. ССР Сойузӗнчи 700 аслӑ шкулта 550 пин студент вӗренет. Совет аслӑ шкулӗсем кашни ҫулах инженерсем, врачсем, агрономсем, геологсем, архитектӑрсем, горн̆аксем т. ыт. те мӗн пурӗ 100.000 ҫын вӗрентсе кӑлараҫҫӗ.

ПСҪЛКС Тӗп Комитечӗ нумай пулмаст̆ суйлавлӑ тӗрӗслӳ туса иртернӗ материалсем ҫамрӑк колхозниксен 49 проценчӗ 5 класран пуҫласа 10 клас вӗренни ҫинчен, 69,2 проценчӗ тӑтӑшах хаҫатсем вуласа тӑни ҫинчен, 54,3 проценчӗ библиотекӑсене ҫӳрени ҫинчен, 20 проценчӗ килти библиотекӑра Ленин тата Сталин кӗнекисем тытни ҫинчен калаҫҫӗ.

Комсомолӗцсенчен, ҫамрӑксем хушшинчен пирӗн нумай талантлӑ учонӑйсем ӳсрӗҫ. Ҫамрӑк учонӑй, географи ӑслӑлӑхӗн докторӗ, Совет Сойузӗн Геройӗ комсомолӗц Йевгени Федӑрӑв йачӗ пӗтӗм тӗнчене паллӑ. Ҫамрӑк учонӑй, математикӑ ӑслӑлӑхӗсен доктӑрӗ, РСФСР Верховнӑй Совет депутачӗ Соболӗв йулташ ӑслӑлӑх ҫамрӑкӗсен чаплӑ представителӗ пулса тӑрат̆. Геолог комсомолӗц Красный йулташ совет ҫӗршывӗн аслӑ геологсен ретне кӗчӗ. Вӑл Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнче Амур йуханшывӗн анат̆ вӗҫнеле сахал тӗл пулакан металлсен вырӑнне тупса палӑртнӑ. Аттестацин аслӑ комиҫҫийӗ 27 ҫулхи учонӑйа М. В. Келдыша физикӑпа математикӑ ӑслӑлӑхӗсен доктӑрӗн учонӑй степӗнне тата „аеродинамикӑ“ специал̆нӑҫӗ тӑрӑх профессӑр йатне пачӗ.

Ӗлӗк, Окт̆абӗр револ̆уциччен, интеллигенци буржуаллӑ классемшӗн ӗҫленӗ. Акӑ, тӗслӗх, пӗр йалти ӗлӗкхи интеллигенцин сӑн-пичӗ тата хал̆хи интеллигенци сӑн-пичӗ:

1867 ҫултан пуҫласа 1917 ҫулччен Тӗрлемес йалӗнчен (Чӑваш республикӗ) 20 „интеллигент“ „тухнӑ“. Вӗсем ҫаксем пулнӑ: кӗҫӗн почтӑ чиновникӗсем 3 ҫын, 3 телеграфис, фел̆дшӗр, ҫулйӗр маҫтӑрӗ, 3 прапарщик тата 9 пуп. Совет влаҫӗ пулнӑранпа чӑваш йалӗнчен, Тӗрлемесрен, Хӗрлӗ Ҫар командирӗсем 30, партин районри комитет ҫекретарӗ, 22 учител, 11 инженер, 3 агроном, предприйати директӑрӗсем 2, 5 землемер, врач 29 бухгалтӗр т. ыт. те тухнӑ.

Совет ҫамрӑкӗсен ӗҫ кунӗ пӗтӗм тӗнчере чи кӗски, ӗҫшӗн лайӑх тӳлени, ҫулленех отпуск пани, кул̆турӑ дворецӗсем, парксем, стадионсем т. ыт. те нумайӑшӗ совет ҫамрӑкӗсене кану правине пурнӑҫа кӗртме май параҫҫӗ. Вӑл правана пурнӑҫа кӗртнине кӑтартакансенчен пӗри вӑл—совет физкул̆тури чечекленсе ҫитӗнни пулса тӑрат̆.

Пирӗн 10 мӗлйун ытла совет гражданӗсем физкул̆турӑпа спорт ӗҫне хутшӑннӑ. Вӗсен аллинче 650 стадион, 7200 спорт площадки, 342 шыв станци, 2.674 йӗлтӗр станци, 100 физкул̆турӑ ҫурчӗ пур.

Ӳссе ҫитӗнекен ӑрӑвӑн канувӗшӗн партипе правителӗствӑ йепле нумай тӑрӑшаҫҫӗ! Йулашки пилӗк ҫул хушшинче совет ҫӗршывӗнче пионерсен дворецӗсемпе ҫурчӗсене мӗнпурӗ 800, ачасен паркӗсемпе сачӗсене 170, ачасен кино театрсене 200 йахӑн, ачасен техникӑлӑ станцисемпе художествӑлӑ воспитани ҫурчӗсене 1000 тунӑ. Техникӑ тата кул̆турӑ кружокӗсенче 10 мӗлйун ытла ача, физкул̆турӑ кружокӗсенче 4 мӗлйун ача вӗренеҫҫӗ.

Совет ҫӗршывӗнчи кашни ҫамрӑк ҫынӑн хаклӑ ӗмӗчӗ—Рабочисемпе Хресчейсен Хӗрлӗ Ҫарӗн бойецӗ йе командирӗ пуласси, алла хӗҫпӑшал тытса пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен тӑван ҫӗршывне сыхласси пулса тӑрат̆. Пирӗн ҫӗршывӑн ҫамрӑк ҫыннисем ҫара кайиччченех ҫине тӑрса ҫар техникине вӗренсе ҫитеҫҫӗ, хӑйӗн ҫапӑҫу пултарулӑхне хӑпартаҫҫӗ.

Пӗтӗм Совет Сойузӗнче Хӗрлӗ Ҫара каймалли ҫамрӑксем хушшинче 18, 4 проценчӗ „Ворошилӑв пек

(Йулашки 4-мӗш страницӑра)

Çĕрулми парса татнă

Кивуйри (Елĕк р.) „Майан пĕр-ремĕшĕ“ колхоз государствăна умĕн-чи обйазательствăсене тултарас тĕ-лĕшпе районра малти ретре тăрать. Çак кунсенче колхоз, çавнашка-лах колхозниксем государствăна çĕрулми, ытти пахча-çимĕçсем те парса татрĕç.

Колхоз тата унăн членĕсем 1938 çулшăн аш-какай парса татнă. Государствăна аш-какай сутса пĕр автомашинă туйаннă.

Й. Кондратйĕв.

Çулталăк планне ытлашшипех тултарнă

КУВАКИНĂ. Чăвашкуљпромсо-йуз çиçтеминчи промысла ертел-сенчен кăçалхи çул Сурмайданти вăрман ертелĕ малта пырать. Ертел çулталăк планне 8 уйăх хушшин-чех 105,9 процент тултарнă.

Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ертел членĕсем ĕçре та-тах та лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Ăмăрту сарăлсах пырать. Кулленхи нормăна 140 процентран кайа мар тултаракансем 15 çын ытла. Стољар И. Поземнăв йулташ йаланах плана 167 процент, гостехекзамĕн пана Д. Муратăв йулташ 165 процент тултараççĕ.

Б-в.

—o—

Çамрăк стахановецсен чĕнĕвне йышăнаççĕ

Çак кунсенче Шупашкарти „Кожупряжь“ ертелти рабочисем-пе служăщчисен пухăвĕ промысла кооперацичи çамрăк стахановец-сен сљочĕ Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине сўтсе-йаврĕ. Пуху чĕнĕве пĕр сасăпа йышăнса, çулта-лăк планне 120 процент тултарма пулчĕ.

Илнĕ обйазательствăна пурнăç-лассишĕн хаљхи вăхăтра ăмăрту сарăлсах пырать. Ăмăртăва 80 çын хутшăннă. Вĕсенчен 47 çын нор-мăна ытлашшипех тултарса пыраç-çĕ. Акă, Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă шорник А. Толстов йулташ кашни кунах плана 153 процент, А. Корабасăв йулташ (санталисем тăвакан) 160 процент, отиралщицă А. Ваганăва 181 процент, шорник Хуртин йулташ 226 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Б.

—o—

Йармăркă пулать

Нойабĕрĕн 1—3-мĕшĕсенче Ка-наш хулинче Октăбĕр уйавĕ умĕн-хи йармăркă пулса иртет.

Йармăркăна суту-илў организа-цисемсĕр пуçне районри колхоз-сем, промертелсемпе маçтерской-сем хăйсен таварĕсемпе тухаççĕ.

Суту-илў организацисем йармăр-кăна нумай промтаварсем кăлараç-çĕ.

Мускаври М. Горький йачĕпе тăракан художĕствăлă Академи театрĕ 40 çул тултарни

Октăбĕрĕн 27-мĕшĕнче Мускаври М. Горький йачĕпе тăракан худо-жĕствăлă Академи театрĕ уçăлни 40 çул тултарчĕ.

1898 çулти октăбĕрĕн 27-мĕшĕн-че А. К. Толстой çырнă „Царь Федор Иоаннович“ пйесăна лартнă. Çакăнтан пуçланса кайаççĕ çак питех те чаплă театрăн хăйулă ĕçĕсем, художĕствăлă чăнлăх ĕçĕсем.

Театра пуçласа йаракан К. С. Станиславскипе В. И. Немирович-Данченко театр искусствине ха-лăх патне, пурнăçри чăнлăх патне сывхартма, сценă çинче вырăс классикĕсемпе йутçĕршыв клас-сикĕсен чи лайăх произведенисене кăтартма шут тытнă. Вĕсем çĕнĕ театр тунă, патша театрĕ мар, чиновниксемпе бўрократсен теат-рĕ мар, художĕствăлă, пурне те курма тивĕçлĕ театр тунă.

Театр пуçлансанах, унăн тĕп принципĕсене Немирович-Данченко çапла пулмала тесе каласа панă: „Пĕрремĕшĕнчен—çынсен пуйан мар класĕ, уйрăмах—чухăн интел-лигенци класĕ, театрта йўнĕ хакпах лайăх вырăн илсе лармала тума тăрăшас пулать; иккĕмĕшĕн-чен —художĕствă задачĕ. Вăл— вырăссен сценă искусствине çĕнĕ сывлăш кĕртме тăрăшасси, ăна кă-măскăланса ларнă кивĕ вырăнтан кăларма тăрăшасси пулать; виççĕ-мĕшĕнчен—çамрăк вăйсене, театр ĕçне вĕреннĕ вăйсене аталанма май парасси пулать“.

Художĕствăлă театр „Царь Федор Иоаннович“ пйесăна лартнă хыççăн кăшт вăхăт иртсенех хă-йĕн чăн-чăн автăрне тупать, вăл— А. П. Чехăв пулнă. Чехăв çырнă „Чайка“ пйесăна лартнипе театр чаплă çĕнтерў тăвать, ăна обшчĕ-ствă йышăнать.

М. Горький йачĕпе тăракан МХАТ хăйĕн сцени çинче пурĕ 50 автăранне 99 пйесă лартнă. Уй-рăмах хытă сасăпа кĕрлесе кайаç-çĕ театр сцени çинчен Максим Горький пйесисем. Çак пйесăсем театрăн социаљнăй çулйĕрне кă-тартса панă. Горький пйесисем театрăн малашнехи çулĕсене—со-циалисăмлă реалисăм çулне тĕлле-се кăтартнă та ĕнтĕ. Йубилей ку-нĕсенче „На дне“ пйесăна театр сцени çинче 922-мĕш хут лартса параççĕ. Художĕствăлă театр со-вет çĕршывĕн пурнăçне кăтарта-кан пйесăсем те чылай лартнă („Любовь Яровая“, „Земля“, „Пла-тон Кречет“).

Театр чаплă, пĕтĕм тĕнчипе пал-лă артиссем пăхса ўстернĕ. Çакăн-па пĕрлех вăл актор искусствин чи лайăх шкулĕ пулса тăнă.

Совет çĕршывĕнчи куллен-кун наукăн, куљтурăн, техникăпа ис-кусствăн çўллĕшĕсене хăпарса пы-ракан халăх хăйĕн йуратнă театрĕ 40 çула тултарнă уйава пысăк са-вăнăçпа палла тăвать. Художĕствă-лă театр совет сценă искусствин чапĕ, тĕнчери театр куљтурин мухтавĕ пулса тăрать.

(ТАСС).

Чехословакине вакласа пайлани тата економикă йенĕпе чуралантарни

Чехословаки правительстви реше-ни йышăннă. Вăл решени тăрăх, Судет облăçĕнче туса кăларса Че-хословакине кўрсе пыракан пур таварсене те пошлинăран (налог-ран) хăтармала тунă.

„Судет таварĕсем“ тесе, Герма-ни хăй таварĕсене Чехословакине кўрсе пырасси, çапла майпа Чехо-словаки промышлĕннăçне çĕмĕрме тăрăшасси уççăнах курăнса тăрать.

Çывăх кунсенчех Чехословаки-пе Германи хушшинчи чукунçул çĕнĕрен ĕçлеме пуçлать. Вăл çыхă-нăва уçиччен малтан, Германи туртса илнĕ районсенчен илсе тухнă нумай пăравуссене, вакун-сене тата ытти тĕрлĕ чукунçул пурлăхне Чехословаки Германийе таварса памала.

Чехословакин çĕнĕ чиккисене палăртса çирĕплетмели срука Гер-мани малала тăсса пырать, вăл Че-хословакирен çĕнĕ те çĕнĕ економи-кăлă уступкăсем илесшĕн тăрăшать.

Берлинран хĕснĕ тăрăх, Мўн-хĕнри килĕшў хыççăн часах Чехо-словакин пур районĕсенче те (За-карпат Украинисĕр пуçне) компар-тийе ĕçлеме чарса лартрĕç, ком-мунисла хаçат-журналсем кăларма чарчĕç.

Хаљ ĕнтĕ Закарпат Украининче те компартийе ĕçлеме чарнă, çавăн пекех коммунисла „Карпатьска правда“ хаçата та хупнă. Вăл ха-çат облăçра чи нумай сарăлнă хаçатсенчен пĕри пулнă.

Чехословакипе йунашар район-сенче Пољшă фашисĕсем пуху-сем иртереççĕ, çав пухусенче вĕ-сем Чехословакин татах чылай ра-йонĕсене Пољшă çумне „кĕске вă-хăтрах пĕрлештерме“ ыйтаççĕ. Словакири фашиссен пуçлăхĕ Си-дор хăй йулашки вăхăтра Пољ-шăра пулнă чух „Словакипе Пољ-шă хушшинчи чикĕне йусама“ ки-лĕшў панă.

Венгри Закарпат Украинине хăй çумне пĕрлештерме ыйтать, унăн требованийĕсене хаљ те сўтсе-йа-ваççĕ-ха.

Дипломатилĕ калаçусем пыраççĕ пулсан та, Венгри террорисĕсем чикĕре киревсĕр ĕçсем тума пăрах-маççĕ. Вĕсем Чехословаки терри-торийĕ çине тапăнса кĕреççĕ, го-сударствă пурлăхне пĕтереççĕ, кĕперсемпе чукунçулсене çĕмĕреç-çĕ, Чехословаки граждăнĕсене Венгри территорийĕ çине иле-иле кайаççĕ т. ыт. те.

Террорисла бандăсене Венгрире организацилеççĕ, унта вĕсене йа-тарласах çар ĕçне вĕрентеççĕ. Чикĕ çывăхĕнче террориссен йа-тарласах тунă лагĕрĕ те пур.

—o—

Чехословакипе Венгри хушшинчи хутшăнусем

ПРАГĂ, октăбĕрĕн 25-мĕш. Ла-йăх пĕлекенсем хушшинчен çапла пĕлтереççĕ: Чехословаки правитĕл-стви икĕ кун кайарах Венгри правитĕлствине панă нотăра калаçу-сене çĕнĕрен пуçлама сĕнсе калани çеç пур. Ĕнер Венгрин Прагăри посланникĕ йут çĕршыв ĕçĕсен министрне Хвалковскине Венгрин ответлă нотине панă. Нотăра мĕн каланине пичетлемеççĕ.

Çапла пĕлтереççĕ: Венгри пра-витĕлстви хăйĕн нотинче халич-ченхи пекех территорисем ыйтать, Чехословаки пама килĕшмен ра-йонсенче плебисцит ирттерме кăна килĕшет.

Йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Хвалковскипе канашланнă хыççăн, премйер-министр Сыровы Словаки правитĕлстви премйерне Тисона, За-карпат Украини правитĕлствин премйерне Бродына, çавăн пекех тата республикă правитĕлствин состав-не кĕрекен автономлă правитĕлст-вăсен пур министрĕсене те Прагă-на чĕнсе илнĕ. Пайан кабинет ларăвĕ пулать, унта Венгри ноти пирки ответ пама хатĕрлеççĕ.

(ТАСС).

Уйав умĕн

ВĂРНАР. Тури Кăканар кол-хозĕнче аслă Октăбĕр уйавĕ тĕл-не йалхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕç-лесе çитерессишĕн уйав умĕнхи социалисăмлă ăмăрту анлăн сарăл-са пырать. Колхоз кĕрхи çĕртме планне йалтах тултарнă, пурĕ 135 гектар сухаланă.

В. Белов.

Совет çамрăкĕсен пурнăçа кĕнĕ прависем

(ЙУЛАШКИ)

тĕл перекенсем“, 15,3 процентĕ ГТО значкисĕсем, 20,7 % ГСО знач-кисĕсем, 30 проценчĕ ПВХО чначкисĕсем. Кунсăр пуçне ĕçрен уйăралмасăр вĕçев ĕçне вĕреннĕ пиншер çамрăксем çара кайаç-çĕ.

1938 çулти призывниксем—вĕсем хутла лайăх пĕлекен, куљтурлă çамрăксем. Призывниксем 75 про-цент ытла аслă, вăтам шкул пĕ-тернисем, вăтам шкул пĕтереймен-нисем. Призывниксем хушшинче хутла пĕлменнисем çук. Патша çарне кайма призыва кĕнисем хушшинче службăна йурăхлисем 45 процент çеç пулнă. Хĕрлĕ Çара 1937 çулта кĕркунне комиççине кĕнĕ совет çамрăкĕсем хушшинче службăна йурăхлисем 80 процент пулнă.

Комсомолĕцсем, малта пыракан совет çамрăкĕсем Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕн бойецĕсен, командирĕсен тата политработникĕсен ретĕнче пулса ответлă çапăçу заданийĕсене пур-нăçа кĕртеççĕ.

Çамрăк бойецсем совет чикки-сене çĕрщыва йут çĕршыв развед-кисен шпионĕсем, сăтăрçăсем, ди-версантсем кĕресрен сыхласа хă-йулăхпа паттăрлăхăн чаплă обра-зецĕсене кăтартаççĕ. Çакăн пек паттăрла ĕçсен тĕслĕхĕсене 69 комсомолец-пограничник кăтарт-нă. Вĕсене Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Белоруççи окру-гĕнчи чикĕ хĕрĕнчи тата шалти çарсен политпайĕсем йышăннă постановлени тăрăх ПСÇЛКС 20 тултарнă йатпа тунă хисеп хăми çине кĕртнĕ. Çав çамрăк патриот-сенчен кашнийех чикĕне пăсакан-сене тытнă, диверсант-террорис-семпе тата фашисла шпионсемпе кашнийех хăйулăн çапăçнă. Çар ĕçĕпе политикăна вĕренес ĕçри от-личник Оксамитный йулташ хĕç-пăшаллă çапăçура фашисла раз-ведкăн агĕнчĕсен ушкăнне тĕп ту-нă.

Хĕрлĕ Çарăн çамрăк бойецĕсем Хасан кўлли патĕнче самурайсем-пе çапăçнă çĕрте те хăйсен пат-тăрлăхне палăртнă, хамăрăн тăван çĕршывăн çуламлă патриочĕсем, пирĕн красноармейĕцсем Йапони граначĕсемпе снарйачĕсем ўксе çурăлнă вучĕ хушшипе пĕр шик-ленсе тăмасăр малала кайнă. Вĕ-сем Сталин йатне асăнса атакăна кайнă. Вĕсем Йапони захватчикĕ-сене Совет çĕрĕ çинчен аçа-çиçĕм-лĕ çапса хуса кăларнă.

Иосиф Минин бойец ун çине йапонĕцсен пĕтĕм батаљйонĕ „бан-зай“ тесе кăшкăрса пынине хирĕç, хăйĕн пулеметне фашисла захват-чикĕсем çине пеме тытăнса, вĕсене пурне те пекех вĕлерсе пĕтернĕ. Мининăн пĕр хĕрхенмесĕр тĕл ти-векен пуљљисенчен хăшпĕрисем çеç хăтăлса йулнă.

Совет Сойузĕн Геройĕсенчен нумайĕшĕ ленинла-сталинла ком-сомол вĕрентсе çитĕнтернисем. Се-ров, Йудин, Черных, Новикăв, Се-менăв, Лакейĕв, Каманин, Љапидев-ский — комсомолĕцсем. Вĕсем пурте, хăйсем йевĕрлĕ пиншер çынсем пекех, социалисăмлă тăван çĕршыва йуратса тăраççĕ.

Совет Сойузĕн 26 çулхи Геройĕ Черных љотчик совет çамрăк пат-риочĕсен шухăшне çапла каласа панă:

— Манăн тăван çĕршыв,—тенĕ вăл—паттăрлăх, хăйулăх, револју-цилĕ çирĕплĕх тăван çĕршывĕ. Çавăн пек тăван çĕршывăн ывăлĕ пулма—чи лайăх пахалăхлă етем пулмала.

А. Кронов.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: паттăр Китай авиацин самољочĕ Йапони интервенчĕсен аеродромĕ çине бомбăсем пăрахма кайать.

(Союзфото).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Йапонин Боло хули (Кăнтăр Ки-тайра) патĕнчен çурçĕр йеннеле куçса пыракан пĕр колонни Луњ-мынња йышăннă, унтан хĕвеланăç йеннеле пăрăнса, Кантон-Хањкоу чукунçулĕ патнеле куçса пырать. Китай çарĕсем чукунçул линийĕ хĕрри тăрăх çĕнĕ позици йышăнаç-çĕ.

Йапони çарĕсем Кантонран çур-çĕр йеннеле наступлени туса тух-нă. Хаљхи вăхăтра Цунхуапа Хуа-çањ хулисем хушшинчи районра çапăçусем пыраççĕ.

Кантонран çурçĕр йенчи Инде станци районне Китайăн çĕнĕ вăйĕ-сем пыраççĕ.

Центр Китайра Китай çарĕсем Ухањ йĕри-тавра çĕнĕ позицисем çинче укрепленисем тăваççĕ. Ухањ-ри халăх, пуринчен ытла рабочи-сем хăй ирĕкĕпе пулăшнипе ĕç калама çук хăвăрт пулса пырать. Хањкоуна Йапони миноносĕцĕсем тата çăмăл карапĕсем пырса çит-нĕ.

(ТАСС).

Китай халăхĕ хирĕç тăма пăрахас çук

Англи хаçачĕсем Йапони çарĕ-сем Хањкоуна туртса илни çинчен пĕлтернисенче, Китай халăхĕ Йа-понине хирĕç тăма пăрахас çук-кине палла туса çыраççĕ. „Дейли телеграф энд Морнинг пост“ ха-çат: Китай салтакĕсем мĕлйун çын ытла Йапони çарĕсем Бейпин— Хањкоу тата Кантон—Хањкоу чу-кунçулĕсем патĕнчен хĕвеланăç йеннеле наступлени тума хăтлан-нине хирĕç тухма хатĕр тăраççĕ, тесе çырать.

Англи хаçачĕ „Таймс“ пĕлтернĕ тăрăх, Китай çарĕсем Кантонран Чан Кай-ши приказĕ тăрăх пăрах-са тухса кайнă. Çакăн пек тума Хунањ провинцин хĕвеланăç пайĕн-че Йапони çарĕсене хирĕç татăк-лăн тăмашкăн Гуандун çарне сых-ласа хăварма кирлĕ пулнă.

Китай хаçачĕсем çакна паллă тăваç-çĕ: Хањкоуран тухса кайасси стра-тегилĕ утăм пулнă. Китай халăхĕ Йапони захватчикĕсене хирĕç тă-расси малала та вăйăрланмасть тата ытларах вăйланать.

„Веньвейбао“ хаçат çапла çырать: Хањкоу патĕнче 5 уйăха пынă ça-пăçура йапонĕцсен вилсе тата аманса 300 пин çын пĕтнĕ тата темĕн чухлĕ çар хатĕрĕсем пĕтнĕ.

(ТАСС).

—o◆o—

Германин Америкăри шпионла центрĕ пирки пыракан процес

Германин Америкăри Пĕрлешў-лĕ Штатсенчи шпионла центрĕн процесĕнче октăбĕрĕн 21—22-мĕ-шĕсенче айăпланакан Румрихпа Гофмана малала допрос тунă. Суд Румрих Германи шпионĕсене ССР Сойузне ăсатас ĕç ваљљи Амери-кăн 50 паспăртне тупма хăтланни çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлнĕ.

Пĕр кун хушши перерыв тунă хыççăн, октăбĕрĕн 24-мĕшпе 25-мĕ-шĕнче зашчитă тухса калаçнă.

Зашчитă айăпланакансене ирĕке кăларма ыйтнине суд йышăнман.

Çавăн пекех тата тинĕс-çар офице-рĕ свидетĕл Браун кăтартса пани-сене итленĕ. Вăл Румрих ăна Гер-мани разведки службине кĕме сĕнни çинчен каласа панă.

* * *

Њйу-Йоркран çапла пĕлтереççĕ: Панамă каналĕн районĕнче арĕс-ленĕ 4 шпион (Германи шпионĕ-сем) пирки çĕнĕ процес пуçланма-ла. Çак шпионсем çыран линине, крепăçсен пайĕсене фотоаппарат-па ўкерсе илнĕ, тар склачĕсен планне тунă т. ыт. те.

* * *

Америкăри пичет çакна кăтарт-са парать: Германи Америкăри Пĕр-лешўлĕ Штатсенче шпионла ĕçе пит анлăн сарса йанă, мирлĕ са-мана вăхăтĕнчи ун пеккине халич-чен нихăçан та курман. Çавăн пе-кех тата, Германи Америкăри Пĕр-лешўлĕ Штатсенче шпионла ĕçсем тунине пула Германипе Америкă хушшинчи хутшăнусем начарлан-чĕç, тесе çыраççĕ хаçатсем.

(ТАСС).

ЙУТ ÇЕРШЫВСЕНЧЕ

* Октăбĕрĕн 25-мĕшĕнче Йапо-ни самољочĕсем Хањкоуран Чан-шана кайакан икĕ пассажирски пă-рахучĕ çине бомбăсем пăрахнă. Пă-рахутсем çинче йапонĕцсем йы-шăннă вырăнсенчен тарса тухнă çынсем, пуринчен ытла хĕрарăм-семпе пĕчĕк ачасем пулнă. Аман-нисемпе вилнисем 300 çын ытла шутланаççĕ.

* Йапони захватчикĕсем Кантон-па Хањкоуна туртса итнĕ май, Италири „фашисла аслă совет“ текенскер (предçедатĕлĕ Муссоли-ни) Йапони правитĕлстви патне салам йанă, саламра „идеологипе политикă тĕлĕшĕнчен тарăнăн, чунтан пĕр шухăшлă пулни“ çин-чен каланă.

(ТАСС).

Суту-илў ĕçĕнчи сăтăрла ĕçсене пĕтерессишĕн

Елĕк районĕнче суту-илў ĕçĕнчи сăтăрла ĕçсене халĕ те пĕтермен. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ суту-илў ĕçĕнчи сăтăрла ĕçсене пĕтересси çинчен йышăннă постановлениие пурнăçа кĕртес пирки райĕçтăвко-мăн суту-илў пай пуçлăхĕ И. Гав-рилăв тата райсойуз правлени предçедатĕлĕ А. Йермолайĕв йул-ташсем нимĕн те тумаççĕ. Вĕсем растратăсемпе кĕрешмеççĕ.

1938 çулти йанварĕн 1-мĕшне районĕпе 36.235 тенкĕ растратă тунине палăртнă пулсан, 3-мĕш квартăл пĕтнĕ çĕре 61.142 тенке çитнĕ. Виççĕмĕш квартăл хушшин-че план тăрăх илсе килме палăрт-нă тавара 391 пин тенкĕлĕх илсе килмен. Пайанхи куна та Вырăс Сурăм, Йўçкасси йалповĕсем пы-сăк убыткăпа ĕçлеççĕ.

Çаксем вĕсем йăлтах суту-илў организацинче шанчăксăр, ĕçре тĕ-рĕсленмен çынсем ĕçленинчен ки-леççĕ. Акă, Йўçкасси йалпо пред-çедатĕлĕ Кољцов 3442 тенкĕ, Чă-ваш Сурăм йалпо предçедатĕлĕ— Петров—3616 тенкĕ йалпо укçине салатса йанă. Çапах та растратчик Петрова халĕ те çав вырăнтах ĕç-леттереççĕ.

Суту-илў ĕçĕнчи сăтăрла ĕçсем ревизи комиççийĕсем йĕркелĕн ĕç-леменнипе пулса пыраççĕ. Вырăс Сурăм йалповĕн ревкомиççи пред-çедатĕлĕ пулнă Данилăв 10 уйăх хушшинче ревизи тунăшăн 1001 тенкĕ те 95 пус йалпо укçине ил-нĕ. Данилăвăн çак киревсĕр ĕçне палăртнă хыççăн ревкомиççи пред-çедатĕлне Соловйов йулташа ларт-нă. Соловйов та 1938 çулта 34 кун ревизи тунă тесе 333 тенкĕ йалпо укçине илнĕ.

Елĕк йалповĕнчи ревкомиççи предçедатĕлĕ И. Петрикăв йул-ташĕ 2-мĕш квартăлта ревизи ту-сан склад пуçлăхĕ Козлов 2751 тенкĕ растратă тунине палăртнă, çапах та çак ĕçе суд аллине пар-са укçана шыраса илмен.

Растратчиксене тупса ĕçе суд аллине парсан та судпа следстви органĕсем ĕçсене час пăхса тух-маççĕ. Чăваш Сурăм йалпо бух-галтĕрĕ 1055 тенкĕ те 13 пус рас-тратă тунă, ĕçĕ 4 уйăх хушши судра выртнă.

Т. Зорин.

Пурте оборонă ĕçне вĕренер

„Страж революции“ колхоз (Ту-таркас р.) çумĕнчи Осоавиахим организацине пĕр уйăх кайарах организацилеңĕ. Организаци пуç-лăхне В. Гераçимăв йулташа суй-ланă. Халĕ Осоавиахим членĕсем пурте оборонă ĕçне вĕренесшĕн, Октăбĕр уйавĕ тĕлне „Ворошиловский стрелок“ значокăн нор-мисене парса значоксем илесшĕн. Çапла пулсан та В. Гераçимăв йулташ нимĕн тумасăр ларать. Çавăн пекех вăл Осоавиахим чле-нĕсене член билечĕсене те валеç-се паман.

Д. Гаврилăв.

—o—

Пĕрремĕш спектакљ

Октăбĕрĕн 23-мĕшĕнче А. Љвовă çырнă „За родину“ йатлă пйесăна лартнипе ача-пăча театрĕн хĕллехи сезонĕ уçăлнă. Пйесăра—халăх тăшманĕсемпе кĕрешнине, совет халăхĕн пĕрлĕхне кăтартнă.

Кăçалхи сезонра ачасен театрĕ çĕнĕ пйесăсем нумай лартса парать, вăл шутран: „Ружье Кима“, „Се-режа Костриков“, „Красная Ша-почка“, „Снежная королева“, „Огни маяка“ тата ыт. те.

Пионерсен çуртне йусаса пĕтер-нĕ. Малашне ачасен театрĕн пос-тановкисем çак çуртра пулаççĕ.

—◆—

Пулни-иртнисем

Шупашкарти „Заготзерно“ пунк-чĕн охранникĕ В. А. Алексейĕв (Тутаркас районĕнчи Наршав йалĕ-сем) ирхине, хуралтан килне тав-рăннă чухне, „Заготзерно“ общчĕ-житин кантăкĕнчен кĕрсе 500 тен-кĕ тăракан електропатефон вăрла-са тухнă. Хăй килне илсе кайма хăраса, вăл ăна театр училищин-че ĕçлекен йăмăкĕ О. Алексейĕва патне илсе кайса пытарнă.

Хăйĕн айăпне йышăннă вăрра арĕслесе суда панă. Патефона ху-çине таварса панă.

—◆—

ТЎРЛЕТНИ

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн ок-тăбĕрĕн 26-мĕшĕнче тухнă номĕр-те ПСК(б)П историйĕ пичетленнĕ иккĕмĕш страницăра, 2-мĕш ко-лонкăн 3-мĕш обзацри малтанхи предложенине çапла тўрлетсе ву-ламала:

„Çĕнĕ производитĕлнăй вăйсем çакна ыйтаççĕ: производствă ра-ботникĕсен тĕттĕм те ăнланусăр крепостнойран ытларах куљтурă-лă та ăнланулă пулмала, машинă-на ăнланса илме тата унпа тĕрĕс усă курма пултаракан пулмала“.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

„ЗАГОТЗЕРНОН“
Шупашкарти хатĕрлев пунктне
БУХГАЛТĔРСЕМ
ТАТА
КАРТОТЕТЧИЦĂ КИРЛĔ.
Адрес: Нагорная улица, Односторонка, пункт „Заготзерно“.
3—2

Шупашкарти „Кооператор“ ертеле
производствăлă бухгалтерине пĕлекен
АСЛĂ БУХГАЛТĔР
васкавлă кирлĕ
Ĕç укçи—килĕшў тăрăх, хватер параççĕ.
ПРАВЛЕНИ.
2—1

„РОССНАБСБЫТĂН“
Чăваш уйрăмĕ пур клиентсене те çакна пĕлтерет:
унăн склачĕсем, инвентаризаци тунă пирки, çак çулхи октăбĕрĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа нойабĕрĕн 1-мĕшĕчен хупă пулаççĕ. Вăл кунсенче
складсенчен тавар памаççĕ.
2—2

Шупашкарти „Промкоопстрой“ ертел çуртсемпе хватерсене шуратас, сыпăçтарас, сăрлас тĕлĕшпе, платник-стољар ĕçĕсем тĕлĕшпе, кăмакасене, килте тыткалакан тимĕр-шăвăç йапаласене йусас тĕлĕшпе организацисенчен те, уйрăм çынсенчен те кирлĕ таранах
ЗАКАЗСЕМ ЙЫШĂНАТЬ.
Заказсене 9 сехетрен пуçласа 16 сехетчен ертел кантурĕнче памала.
Адрес: ул. Карла Маркса, д. № 15, телефон 4—57.
2—2

„ЧĂВАШ КОММУНĔ“ ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ ПĔР УЙĂХА 2 Т. 50 ПУС, 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П., 6 УЙĂХА 15 Т., ÇУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ, ПОДПИСКĂНА ÇЫХАНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИСМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 555. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793.ф. 6. 58 × 84 п. л.